ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 1
ЫТЛАРИКУН
№ 1 (8653)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

Çĕнĕ çул ячĕпе САЛАМ, юлташсем!

1952

Совет çĕршывĕшĕн 1951 çул совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе коммунизм строительствинче пысăк çĕнтерӳсем тунă çул пулчĕ. Вăрçă хыççăнхи сталинла пилĕк çуллăх плана ăнăçлă тултарнă. Совет халăхĕ çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли аслă ĕçсен сталинла программине пурнăçлассишĕн кĕрешсе, иртнĕ çулта çĕнĕ çитĕнӳсем турĕ. Çĕнĕрен вăрман тăрăхĕсем лартса тунă. Аслă Сталин кăтартса панипе Совет халăхĕ Атăл, Днепр, Дон, Аму-Дарья шывĕсем çинче тĕнче историйĕнче пулман пысăк гидроэлектростанцисемпе çĕре шăвармалли сооруженисем тума тытăнчĕ. Пушхирсем урлă каналсем хывать. Тинĕссене пĕр-пĕринпе çыхăнтарать. Шывсăр вырăнсене чĕрĕлĕх кӳрет. Совет çĕршывĕнче этем çутçанталăк вăйĕсене пĕтĕмпех хăйне пăхăнтарать.

Совет халăхĕ промышленность, ялхуçалăхĕ тата культура строительствинче тунă çитĕнӳсем пысăк, вĕсем пурте пирĕн куç умĕнче. Çак иртнĕ çулталăк хушшинче пирĕн çĕршывра çĕнĕ заводсемпе фабрикăсем нумай туса лартнă, чугун çулсем хывнă, пурăнмалли çуртсем тунă. Çак кунсенче нефтяниксем, çĕр кăмрăк кăларакансем аслă Сталина 1951 çул планне ăнăçлă тултарни çинчен пĕлтерчĕç.

Социализмлă ялхуçалăхĕ тырпул, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне чылай ӳстерчĕ. Ялхуçалăхĕ хамăрăн советлă социализмлă Тăван çĕршыва апат-çимĕç, чĕртавар ытлăн-çитлĕн парса тăрать.

Социализмлă культура хăйĕн аталанăвĕнче çĕнĕ пусăма çĕкленчĕ. Аслă Совет Союзĕнче пĕрлешсе тăракан халăхсен содержани енĕпе социализмлă, форма енĕпе нациллĕ культури чечекленсе сарăлать. Иртнĕ çулталăк хушшинче наука, литература, искусство енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунă. Пирĕн писательсем, композиторсем совет халăхне çĕнĕ, пуян содержаниллĕ, совет çыннисен геройла пурнăçне кăтартакан произведенисем туса пачĕç.

Совет халăхĕ коммунизм строительствинче тунă çитĕнӳсем пирĕн социализмлă государство хăватне тата ытларах вăйлатрĕç. Çак çитĕнӳсем вĕсем совет çыннисен пурнăçне тата ытларах лайăхлатма, вĕсен культурăллă шайне тата ытларах хăпартма май пачĕç.

Совет çынни хăйĕн ыранхи пурнăçĕшĕн иккеленмест, мĕншĕн тесен ăна тата та илемлĕрех, тата та савăнăçлăрах малашлăх кĕтсе тăрать. Çавăнпа та вăл Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн хăйĕн пĕтĕм вăйне парса ĕçлет. Ĕçре совет çыннисем тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтартаççĕ. Ĕçре мухтава тухнисене пĕтĕм совет çĕршывĕ хисеплет.

Совет халăхĕн моралĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ, туслăхĕ çултан-çул ӳссе тĕрекленсе пырать. Совет халăхĕ коммунистсен партийĕ тавра. Совет правительстви тавра, хăйĕн юратнă çулпуçĕ Сталин юлташ тавра таччăн пĕтĕçсе тăрать.

Иртнĕ çулта тĕнчере социализмпа демократи вăйĕсем тата ытларах ӳссе тĕрекленчĕç. Халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисем коммунистсен партийĕсемпе рабочи партийĕсем ертсе пынипе татăклăн социализм çулĕ çине тăчĕç. Совет Союзĕ тăванла пулăшнипе Польша, Чехословаки, Венгри, Румыни, Болгари, Албани çĕршывĕсенчи халăхсем хуçалăхпа культура строительствинче çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ туса пыраççĕ. Китай Халăх Республики демократиллĕ аслă улшăнусем турĕ. Нимĕç халăхĕ ирĕклĕ, пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман демократиллĕ Германи çĕршывĕ туса хурассишĕн паттăррăн кĕрешет. Корея, Вьетнам, Малайя халăхĕсем хăйсен ирĕклĕхĕшĕн çĕнтерӳллĕн кĕрешеççĕ.

Совет Союзĕ пĕтĕм вăйне мирлĕ строительствăна хурать, вăл тĕнчери халăхсем хушшинче нумай вăхăта пыракан çирĕп мир туса хурассишĕн кĕрешет. Совет Союзĕ ертсе пыракан мир, демократи тата социализм лагерĕ çак иртнĕ çул хушшинче тата ытларах вăйланчĕ. Совет правительстви тытса пыракан мир политики пĕтĕм тĕнчери халăхсене миршĕн, вăрçă хăрушлăхне хирĕç кĕрешме хавхалантарать.

Капитализм тĕнчишĕн 1951 çул экономика кусĕкретĕнех хавшаса пынă çул пулчĕ. Капитализм тĕнчине вăл хăйĕн вăйĕпе татса пама пултарайман хирĕçӳсем тытса çураççĕ. Капитализмлă çĕршывсенче ĕççĕрлĕх, чухăнлăх кунтан-кун ӳсет. Вĕсене экономикăллă тата политикăллă кризис хăратса тăрать. Урса хĕçпăшалланни те, тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕсенче вăрçă çулăмне чĕртсе яма хăтланни те капитал тĕнчине çак хăрушлăхран хăтарса хăварма пултараймасть.

Капитализмлă çĕршывсенчи ĕççыннисем хăйсен ыранхи пурнăçĕшĕн сехĕрленсе тăраççĕ. Вĕсем çакна пĕлеççĕ: капитализм ĕççыннисене тата та ытларах хĕн-хур кăна кӳме пултарать. Капитализм этемлĕх аталанăвĕн çулĕ çинче малашлăха пӳлсе тăракан пысăк чăрмав пулса тăчĕ. Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем ытларах та ытларах çак чăнлăха ăнланса илеççĕ: этемлĕхе социализм кăна çăлăнăç кӳме пултарать. Çавăнпа та çĕр çинчи мĕнпур тӳрĕ шухăш-кăмăллă çынсем мирпе демократи лагерĕн пуçĕнче пыракан Совет Союзĕ çине шанса пăхаççĕ, вăл тытса пыракан сталинла мир политикине чĕререн хапăл туса йышăнаççĕ.

Пĕтĕм тĕнчере миршĕн тăракансен юхăмĕ вăйланса пырать. Миршĕн тăракансене Сталин юлташăн çак аслă сăмахĕсем хавхалантараççĕ: «Мире сыхласа хăварас ĕçе халăхсем хăйсен аллине илсен тата ăна вĕçне çитиччен хӳтĕлесе тăрсан, мир сыхланса юлĕ тата тĕреклĕнĕ». Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тума чĕнсе калани çине çĕр чăмăрĕ çинче пурăнакан çĕршер миллион çынсем алă пусрĕç. Çакăнпа вĕсем мир ĕçне сыхласа хăварма хатĕр тăни çинчен пĕлтерчĕç. Халăхсем Корейăри вăрçа чарса лартассишĕн, атомлă хĕçпăшална вăрçăра усă курма ирĕк парасшăн, хăрушăллă [illegible] тăраççĕ.

Пирĕн çĕршыври халăхсем, Ленин — Сталин партийĕ ертсе пынипе, капитализм пусмăрĕнчен ĕмĕрлĕхе хăтăлчĕç. Вĕсем историллĕ кĕске вăхăт хушшинче хăйсен çĕршывĕнче социализмлă общество туса хучĕç. Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывра коммунизм строительстви улăпла хăвăртлăхсемпе вăйланса пырать. Çакăн пек условисенче кĕтсе илчĕç çĕнĕ çула Совет çĕршывĕнчи халăхсем.

Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле çĕнĕ, 1952 çула Чăваш республикинчи ĕççыннисем савăнăçлăн кĕтсе илчĕç. Республикăри фабрикăсемпе заводсен коллективĕсем, чугун çул работникĕсем, ялхуçалăх ĕçченĕсем, наукăпа искусство деятелĕсем çĕнĕ çула тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн тăрăшса ĕçлерĕç. Çĕнĕ çула производствăллă парнесемпе кĕтсе илесси совет çыннисен йăлине кĕчĕ. Çак кунсенче вăрман промышленность предприятийĕсенче коммунизм стройкисем валли йывăç çителĕклĕ хатĕрлесе парассишĕн кĕрешӳ çĕнĕ хăватпа вăйланчĕ.

Иртнĕ 1951 çул коммунизм строительствинче пысăк çĕнтерӳсем тунă çул пулчĕ. 1952 çул коммунизм строительствинче тата пысăкрах çĕнтерӳсем тумалли çул пулĕ. Совет çыннисем çĕнĕ çула кĕрсе çĕнĕ хăватпа ĕçлеме хатĕрленеççĕ.

Аслă Сталин çул кăтартнипе, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе Совет Союзĕнчи ĕççыннисем шанчăклăн коммунизм патне пыраççĕ.

Çĕнĕ çулта çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвассишĕн!

Çĕнĕ çул ячĕпе, юлташсем!

Совет Союзĕ тăрăх

Çĕр мамăкĕ акса тăвакан миллионер-колхозсем

[illegible]ЧНАБАД, декабрĕн 29-мĕшĕ. [illegible] Канибадам районĕнчи Карл Маркс [illegible] тăракан колхоз республикăра чи [illegible] тухăçлă çĕр мамăкĕ туса илнĕ. Акакан пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çинче кашни гектартан 46,7 центнер çĕр мамăкĕ-сырец пухса илсе, хатĕрлев пункчĕсене леçсе панă.

Çĕр мамăкĕ пысăк тухăçлă пулнă май колхозăн тупăшĕ нумай ӳснĕ. Государствăна панă çĕр мамăкĕшĕн колхоз счечĕ çине 5.170 пин тенкĕ ытла укçа куçарнă, ку вăл колхоз çĕр мамăкĕшĕн 1950 çулта илнĕ укçа-тенкĕрен 5 хут нумайрах.

Республикăри çĕр мамăкĕ акса тăвакан колхозсем пурте миллионшар тенкĕ тупăш илнĕ. Çĕр мамăк тухăçлăхне ӳстернĕшĕн кăна колхозсене преми шучĕпе хушса парса 640 миллион тенкĕ тӳленĕ. Çĕр мамăкĕ акса тăвакан вуншар колхозсен хăйсен счечĕсем çинче 10 миллион-тенкĕрен пуçласа 15 миллион тенкĕ таран тата ытларах та укçа пур.

Автомобиль тăвакансен хули

ГОРЬКИЙ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Молотов ячĕпе тăракан автозавода лартнă чухне унта рабочи поселок тунă. Рабочи поселок 20 çул хушшинче пĕрмаях пысăкланса пынă. Ăна халĕ тивĕçлипех автомобиль тăвакансен хули, тесе калаççĕ. Автозавод районĕнче—вуншар шкулсем, клубсем, ача яслисем, стадионсем, улма çырла сачĕсем, культурăпа кану паркĕ уçнă.

1951 çулта Автозавод районĕнче пурăнмалли çуртсем 70 ытла лартнă. Автозаводра ĕçлекенсен 600 çемйи ытла 1952 çулта çĕнĕ çуртсенче кĕтсе илет. Сывăх кунсенче строительсем 75 хваттерлă çĕнĕ çурт [illegible].

Çĕнĕ аслă шкулсем

ССР Союзĕн Аслă вĕренӳ министерстви йышăннă тăрăх çĕршывра чылай çĕрте çĕнĕ аслă шкулсем уçăлаççĕ.

Сталинградра хула хуçалăх инженерĕсен институтне тăваççĕ. Çĕнĕ аслă шкул 400 çын вĕренме илет. Петрозаводскра (Карело-Финн ССР-ĕ) тата Тираспольте (Молдаван ССР-ĕ) педагогика институчĕсем уçма йышăннă.

Мускаври В. В. Куйбышев ячĕпе тăракан инженерно-строительнăй институт коммунизмăн аслă стройкисем валли пысăк квалификациллĕ кадрсем вĕрентсе хатĕрлет, халĕ ку института пысăклатаççĕ. (ТАСС).

Çĕнĕрен 40 кинотеатр уçнă

1951 çулта çĕршыври хуласенче тата ялсенче çĕнĕрен 40 кинотеатр уçнă.

Орел хулинче пурăнакансем валли çак кунсенче икĕ залла кинотеатр туса пĕтерчĕ. Тула хулинче 600 вырăнлă, Ивановăра 300 вырăнлă кинотеатрсем уçнă. Вильнюс хулинче нумай пулмасть çĕнĕ кинотеатр туса лартнă, ăна «Победа», тесе ят панă. Вăл архитектура енĕпе питĕ чаплă çурт пулса тăрать. Карагандăра тата Кемеровăра шахтерсем валли кинотеатрсем туса лартнă. Сталинградра «Гвардеец» кинотеатра юсаса ĕçе янă.

Украинăра, Белоруссире, Азербайджан, Грузи тата Армени республикисенче çĕнĕ кинотеатрсем уçăлнă.

Çĕнĕ çул умĕн çĕршыври чылай хуласемпе ялсенче тата темиçе кинотеатр уçаççĕ. (ТАСС).

Горловкăри (Сталино облаçĕ) Румянцев ячĕпе тăракан шахта—Донбасри малта пыракан шахтăсенчен пĕри. Шахтăра ĕçлекенсен ăмăртăвĕнче 34—38-мĕш номерлĕ участок коллективĕ малта пырать. Участок 1951 çулхи декабрьте планран ирттерсе çĕр кăмрăкĕ нумай кăларнă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: чи лайăх стахановецсем шахтăна анас умĕн. Сулахайран сылтăмалла—В. С. Уваровпа Н. В. Шатохин забойщиксем, участок начальникĕ Н. М. Рулев тата В. Г. Козинпа К. Д. Лаптюхов забойщиксем.

С. ГЕНДЕЛЬМАН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн!

Маншăн. «Буревестник» фабрикин мĕнпур коллективĕшĕн, 1951 çул ырăн кайми çул пулса юлать. Пирĕн предприятире продукцин хăйне ларакан хакне кашни операци тăрăх чакарассишĕн пуçланнă социализмлă ăмăрту çĕршывра анлă сарăлчĕ. Пирĕн фабрикăна промышленноçăн тĕрлĕ отраслĕсенчен ултçĕр ытла предприятирен представительсем килсе курчĕç. Григорий Мухановпа пĕрле эпир Мускаври, Ленинградри, Ивановăри, Киеври чылай фабрикăсенче пултăмăр, çав фабрикăсенче хамăрăн ĕç опычĕпе паллаштартăмăр. Пур çĕрте те эпир ĕçлеме лайăх асăрхарăмăр: [illegible] Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетме ĕççыннисем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме хатĕр.

Пирĕн фабрика коллективĕ çулталăкри программăна срокчен тултарчĕ, çулталăк пуçланнăранпа, продукцин хăйне ларакан хакне чакарса, планран ирттерсе темиçе миллион тенкĕ перекетлесе пачĕ. Виççĕмĕш кварталти ĕçсен итогĕсем тăрăх, фабрикăна СССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă.

Эпĕ пилĕк уйăх хушшинче продукцин хăйне ларакан хакне 34 пин тенкĕлĕх чакарма пултăрăм. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, обязательствăна эпĕ пурнăçланă. Вунпĕр уйăх хушшинче 58,6 пин тăваткал дециметр чухлĕ сăран перекетлерĕм, çав сăранран виçĕ пин мăшăр атă-пушмак çĕленĕ.

М. И. ЛЕВЧЕНКО,
Мускаври атă-пушмак çĕлекен «Буревестник» фабрикин закройщици.

Ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн!

Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле савăнса эпир çак кунсенче 1951 çулхи итогсене тăватпăр.

Пирĕн завод коллективĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ: çулталăкри плана срокчен тултарчĕ, планран ирттерсе нумай миллион тенкĕ тупăш илчĕ.

Производствăн кашни операцине питĕ лайăх пахалăхпа пурнăçлассишĕн пыракан ăмăртăва заводра темиçе пин çын хутшăннă.

Эпир хамăрăн ĕçри ăсталăха ӳстерсех пыратпăр. Юлашки вăхăтченех пирĕнтен кашниех пĕрер станок çинче ĕçленĕ, смена вăхăтĕнче [illegible] пăра вагон стяжкисем валли 200—250 винт туса хатĕрленĕ. Халĕ эпир пĕр вăхăтрах икшер станок çинче ĕçлетпĕр, 400—450 деталь туса паратпăр.

Эпир хамăр умма çакăн пек задача лартрăмăр: çĕнĕ çулта ĕç тухăçлăхне 12 процент ӳстермелле, изделисен хăйне ларакан хакне 6 процент чакармалла.

Ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн, юлташсем!

А. ЖАНДАРОВА, О. АГАФОНОВА,
Люблинăри Л. М. Каганович ячĕпе тăракан литейно-механически заводри токарьсем.

Нефть ытларах кăларассишĕн кĕрешнĕ çулталăк

1951 çул пирĕншĕн, Каспи нефтяникĕсемшĕн, тинĕс тĕпĕнчен нефть кăларас ĕçре пысăк çитĕнӳ тунă çулталăк пулчĕ. 1951 çулта пирĕн коллектив, çĕре хăвăрт шăтармалли меслетпе усă курса, срокчен темиçе кун малтан тинĕсре тарăн икĕ скважина туса пĕтерчĕ, çав скважинăсем çĕршыва пиншер тонна нефть пачĕç. Халĕ бригада çыранран инçетре разведкăллă скважина тăвас енĕпе ĕçлет, ку скважина халиччен тунă скважинăсенчен 1,5 километра якăн тарăнрах пулать.

Çĕнĕ çулта пирĕн умра çакăн пек задача тăрать: нефть кăлармалли скважинăсем тăвас тĕлĕшпе ытларах ĕçлемелле, çĕнĕ вырăнсенче нефть кăларма тытăнмалла. Тарăн скважинăсем çĕнĕрен тумалла пулать. Эпир ĕçе лайăхрах организацилеме, çитменлĕхсене пĕтерме кирлĕ майсем тупрăмăр.

Пирĕн коллектив хăйĕн хастарлă ĕçĕпе малашне те юратнă Тăван çĕршыв хăватне тĕреклетсе пырĕ.

Ага НЕЙМАТУЛЛА,
Сталински районĕнчи тинĕсре скважинăсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен буровой мастер, Сталинла премин лауреачĕ.

Коллектив хастарлăхĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Экстракт тăвакан «Большевик» завод коллективĕ 1951 çулта чылай çитĕнӳсем турĕ. Завод продукци туса кăлармалли çулталăкри плана декабрĕн 3-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. 11 уйăх хушшинче ĕç тухăçлăхĕ планпа палăртнинчен 11 процент ӳснĕ, продукцин хăйне ларакан хакĕ 6,3 процент чакнă. Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем ăмăртса ĕçленипе завод 1,2 миллион тенкĕлĕх чĕртавар перекетлерĕ, планран ирттерсе пурĕ 1.761 пин тенкĕ перекетлесе хăварчĕ.

1951 çулта завод коллективĕ çӳçпе чăрăш хуппинчен экстракт туса кăларма вĕренсе çитрĕ. Завод, продукци туса кăлармалли задание чыслă пурнăçласа пынă вăхăтрах, [illegible] йывăç диффузорсем вырăнне металран тунă 12 диффузор тата ытти чылай оборудовани вырнаçтарса лартрĕ. Пурăнмалли нумай çуртсене юсанă.

Коллектив пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ пĕрмай ӳссе пыни çакăнтан курăнать. Çулталăк хушшинче эпир социализмлă обязательствăра йышăннинчен виçĕ хут ытларах продукци кăлартăмăр. Сентябрь уйăхĕнче заводра продукцин хăйне ларакан хакне кашни операци тăрăх чакарассишĕн социализмлă ăмăрту пуçланчĕ. Ноябрь уйăхĕнче юман вуттипе йывăç хуппине вĕтетекен рабочисем продукцин хăйне ларакан хакне 4,7 процент чакарчĕç. Орешниковпа Вильдянов рубильщиксем уйăхра 900-шер тенкĕлĕх ытла чĕртавар перекетлерĕç.

Йывăç хуппинчен экстракт туса кăларакан цехри тата электростанцири рабочисем те продукцин хăйне ларакан хакне кашни операци тăрăх чакарассишĕн ăмăртаççĕ.

Заводра çулталăкри ĕç нормине 150—200 процент тултарнă стахановецсем сахал мар. Орловпа Хуснутдинов диффузорщиксем, Корчагина, Сергеева тата Шефер выпарщиксем, Фоминпа Лаптенков выгрузчиксем тата ыттисем те ĕçре пахатĕслĕхсем кăтартаççĕ, стахановла ĕçпе ыттисене хавхалантараççĕ. Заводра ĕç нормине тултарман рабочи çук.

1952 çулта заводăн 1951 çулхинчен [illegible] процент ытларах продукци туса кăлармалла, ĕç тухăçлăхне чылай ӳстермелле, продукцин хăйне ларакан хакне чакармалла. Кунпа пĕрлех пирĕн электростанцие çĕнетсе пысăклатмалла, кивĕ оборудование улăштармалла, пурăнмалли çуртсем çĕнĕрен чылай туса лартмалла, кивисене юсамалла.

Завод коллективĕ, иртнĕ çулта тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, малашне коммунизм строительствинче тата пысăкрах çĕнтерӳсем тăвĕ.

П. ЛУЗИН,
Çĕмĕрлери «Большевик» завод директорĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнчи çитĕнӳ

ОРИНИНО (Муркаш районĕ), декабрĕн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). «Красное Сормово» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем çĕнĕ çула вăрман хатĕрлес ĕçре пысăк çитĕнӳ тунипе кĕтсе илеççĕ.

Пирĕн колхоз 4.700 фестметр йывăç касса хатĕрлеме, каснă йывăçа 4.500 фестметр çул хĕррине турттарса тухма задани илнĕччĕ. Задание срокчен тултарнă хыççăн, колхозниксемпе колхозницăсем государствăна тата 1.000 фестметр йывăç хатĕрлесе пама пулчĕç. Вĕсем, ăмăртса ĕçлесе, панă сăмаха чыслă пурнăçларĕç.

Паянхи куна пирĕн колхоз членĕсем 5.500 фестметр йывăç касса хатĕрлерĕç, 4.800 фестметр çул хĕррине турттарса кăларчĕç.

«Красное Сормово» колхоз членĕсем сурăкине хатĕрленес тĕлĕшпе те хастарлă ĕçлеççĕ.

А. МОИСЕЕВ.

Ялхуçалăх продукчĕсем ытларах хатĕрленĕ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсем ялхуçалăхне малалла аталантарас ĕçре 1951 çулта çĕнĕ çитĕнӳсем тунă. 1950 çулхипе танлаштарсан, пысăкрах тухăçлă тырпул пухса кĕртнĕ, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе чылай лайăхлатнă. Çакна май республикăри колхозсем Тăван çĕршыв валли ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе парассине ӳстерсе пыраççĕ.

Колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе тыра памалли тата МТС-сем ĕçленĕшĕн натурăпа тата тӳлемелли, кантăр тата йĕтĕн вăрлăхĕ, çĕрулми, утă, аш-какай хатĕрлемелли плансене ăнăçлă тултарнă. 1951 çулта государствăна унчченхи çулхинчен 2 миллион та 115 пин пăт тыра, 129 пин пăт çĕрулми, 158 пин пăт ытла утă, 11.800 пăт нумай çул ӳсекен курăк вăрлăхĕ, 31.260 пăт аш-какай ытларах хатĕрлесе панă.

Каховка гидроузелне тăвас ĕç 1952 çулта

КАХОВКА, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Днепрострой» коллективĕ çĕнĕ çула — 1952 çула ĕçри пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илет. Строительсем 1951 çулти тĕп задачăсене ăнăçлă пурнăçланă.

«Днепрострой» начальникĕ С. Андрианов юлташ ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ:

— 1951 çулта Каховкăри гидроэлектростанци строителĕсем материальнă-техникăллă хăватлă никĕс туса хучĕç, ку вăл гидроузел тунă çĕрти тĕп ĕçсене анлă сарма, ăнăçлă пурнăçлама май парать.

Днепр çыранĕнче çĕнĕ хула пулать. Хулари кварталсенче стройкăра ĕçлекенсем вырнаçнă. Çĕнĕ шкул, поликлиника, магазинсем, столовăйсем туса лартнă. Вăхăтлăха туса лартнă теплоэлектростанци темиçе уйăх хушши ĕнтĕ строительство площадкине электричество энергийĕ парса тăрать, бетон завочĕ тата строительствăна пулăшакан ытти предприятисем те ĕçлеççĕ.

Мускавпа Ленинградри, Уралпа Донбасри, Днепр тăрăхĕнчи, Çĕпĕрти тата çĕршыври ытти промышленность центрĕсенчи çĕршер предприятисем Каховкăна машинăсем, оборудовани, строительство материалĕсем ярса тăраççĕ.

«Днепрострой» коллективĕ умĕнче 1952 çулта пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Ситес çул тĕп сооруженисене тăвас ĕç пуçланать. Çĕнĕ çулăн пĕрремĕш кварталĕнче тумалли ĕçсен хисепĕ 1951 çулхи пĕрремĕш кварталтинчен 11 хут пысăкрах пулать. Пурăнмалли çуртсем тата культурăпа йăла çурчĕсем нумай лартмалла, вĕсем 40 пин тăваткал метр чухлĕ пулмалла, çав шутра культура çурчĕ, икĕ вăтам шкул, больница, мунчапа кĕпе çумалли комбинат тата ытти çуртсем тума палăртнă. Аслă стройкăра тимĕрпе бетонран япаласем тăвакан завод, хăйма çуракан завод, бетон завочĕ лартмалла, çак предприятисен строительство ĕçне пулăшса тăмалла. Шлюз, пĕве тăвас, вĕсене тума котловансем чавас, гидроузелăн тĕп пайĕсене тума бетон хывас ĕçе анлă сармалла.

Строительсем çав ĕçсене пурнăçлама хатĕрленеççĕ. Стройкăри учебнăй комбинатра çĕршер рабочисем вĕренеççĕ, вĕсем хăйсен ăсталăхне ӳстерсе пыраççĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче Каховкăра Одессăри гидротехника институчĕ уйрăмĕн пĕрремĕшпе иккĕмĕш курсĕсенче занятисем пуçланаççĕ.

Пĕтĕм халăх пулăшса пынипе, большевиксен партийĕ, Совет правительстви тата И. В. Сталин юлташ строительсемшĕн пĕрмаях тăрăшнипе хавхаланса, «Днепрострой» коллективĕ ĕçри хăвăртлăха кунтан-кун ӳстерсе пырассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

Муркаш районĕ вăрман хатĕрлемелли плана тултарнă

Декабрĕн 29-мĕшĕ тĕлне Муркаш районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăç хатĕрлемелли плана тултарчĕç. Район 40 пин кубометр йывăç касса хатĕрлесе, 37 пин кубометр çул хĕррине илсе тухса сезонти плана 100 процент тултарчĕ.

Стахановла вунăкунлăх ирттерессине пуçарса яракан «Красное Сормово», Энгельс ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан, «Труд» тата «Правда» колхозсем социализмла обязательствăна пурнăçларĕç. Вĕсем планран ирттерсе 1.500 кубометр йывăç касса хатĕрлерĕç, 2.000 кубометр çул хĕррине илсе тухрĕç.

Халĕ районти колхозниксем планран ирттерсе йывăç хатĕрлеççĕ.

ВКП(б) Муркаш райкомĕн секретарĕ ЗАЙЦЕВ.

Райсовет исполкомĕн председателĕ ЛОГИНОВ.

Çĕмĕрле вăрманпромхозĕн директорĕ РОЖКОВ.

Вăрнар, Йĕпреç, Çĕмĕрле вăрманпромхозĕсем 1951 çулхи вăрман хатĕрлев планне тултарнă

Вырăнсенчен пĕлтернĕ тăрăх, Вăрнар, Йĕпреç, Çĕмĕрле вăрманпромхозĕсем 1951 çулхи вăрман хатĕрлев планне тултарнă.

Пуян та культурăллă пурăнатпăр

Ленинпа Сталин пире телейлĕ те хаваслă пурнăç туса пачĕç. Çĕнĕ çула кĕнĕ май халăхи телейлĕ пурнăçпа мухтанса хавхаланатăн, патша саманинчи тĕксĕм пурнăç ĕмĕрлĕхех пĕтнĕшĕн савăнатăн.

Эпĕ çитмĕл çула çывхарнă çын, революциччен пĕтĕм пусмăра тӳссе курнă. Манăн хамăрăн ачасене, ачасен ачисене ĕççыннисен ĕлĕкхи йывăр пурнăçĕпе халăхи телейлĕ те çутă пурнăçĕ çинчен каласа парас килет.

Ĕлĕк, Октябрьти революци пуличчен, ĕççынни нушапа пусмăр çеç курнă, вăл урăх нимĕн те курман. Эпĕ хамăр яла илсе кăтартасшăн. Ун чухне пирĕн Анастасово ялĕнче Пановсемпе Фраузн помещиксем, кулаксем хуçа пулса пурăнатчĕç. Ялти власть пĕтĕмпех вĕсен аллинче пулнă. Вĕсем ĕç хресченĕсенчен мăшкăлатчĕç, кун çути кăтартмастчĕç. Çĕрĕн пысăк пайĕ помещиксемпе кулаксен аллинчеччĕ. Чăн-чăн çĕр ĕçлекенĕн—хресченĕн çĕрĕ ытла та хĕсĕкчĕ, ун чухнехи пек каласан, чăх çӳремелĕх те çĕр çукчĕ.

Тĕслĕхрен, эпĕ хамăн çемьенех илетĕп. Пирĕн çемьере вунтăватă çын пулнă, анчах пирĕн çĕр чĕрĕк гектартан мала пулман. Ун чухне нумайăшĕн çăкăр-тăвар çĕнĕ çула та çитмен. Хресченĕн выльăх-чĕрлĕхе çӳретме те çĕр пулман. Çавăнпа та ирĕксĕрех помещик патне кайма тивнĕ. Кашни хресченĕн хăйĕн выльăхне çӳретнĕшĕн помещика утă çулса, тырă вырса, авăн çапса памалла пулнă. Кунсăр пуçне тата мĕн-мĕн кăна туса паман-ши! Эпир пĕтĕм çемйипех пĕрер эрнелĕхе помещик уйне ĕçлеме тухаттăмăр.

Пусмăрлă пурнăç ĕмĕрлĕхех иртсе кайрĕ. Халĕ пирĕн ачасем вăл пурнăçа ваттисем каласа панă тăрăх, кĕнекесем вуласа кăна пĕлеççĕ.

Çирĕм икĕ çул каялла ялта коллективлă хуçалăх организациленчĕ. Совет влаçĕ колхоза ĕмĕрлĕхе пин гектара яхăн çĕр çирĕплетсе пачĕ. Колхозниксем иксĕлми хăватпа ĕçлеççĕ, çĕрĕçне лайăхлатса пыраççĕ. Вĕсем çĕре лайăх сухалаççĕ, лайăх вăрлăх акаççĕ, агрономи науки вĕрентнине тимлĕ пурнăçлама тăрăшаççĕ. Ĕлĕк ĕç хресченĕ хытса кайнă ани çине кусçуль юхтарса пăхнă пулсан, халĕ колхозник анлă хир çине тулли кăмăлпа савăнса пăхать. Ĕлĕк çĕр çине пăхса савăнмалли пулман, мĕншĕн тесен пирĕн вырăнта, сăмахран, пĕр гектар çĕр çинчен час-часах 20—25 пăт кăна тырă туса илнĕ. Колхоз çĕре çĕнетрĕ, тырпул тухăçлăхĕ темиçе хут ӳсрĕ. Халĕ пирĕн çынсем колхоз çĕрĕ çинче хăйсен телейне, пуян пурнăçне туптаççĕ.

1951 çул. Çак çул ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă туса иртнерĕ çул пулчĕ. Государствăна срокчен тырă парса татрăмăр. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозри ĕçлеме пултаракан çĕр аллă çын куннесĕрне пăхмасăр ĕçлерĕç. Кăçал кашни колхозник вăтам шутпа 280 ĕçкунĕ турĕ. Сакă ĕнтĕ ирĕклĕ çĕр çинчи çынсем мĕн тери хавхаланса ĕçленине кăтартать.

«Новый путь» колхоз райсемколхоз шутланать. Эпир кашни çулах «Главсортзаготзерно» пунктне паха сортлă вăрлăх парса тăратпăр.

Эпир кĕркуннех вăрлăх тата ытти фондсем валли тырă çителĕклĕ уйăртăмăр. Вăрлăха лайăх сортласа, тасатса хатĕрлерĕмĕр.

Колхозниксем государство валли те, хамăр валли те çителĕклĕ тырпул туса илнĕшĕн савăнаççĕ. Кашни ĕçкунĕ çине мĕн чухлĕ тырпул тивнине татăклăнах шута илсе çитереймен-ха. Аванс шучĕпе чылай колхозник хуçалăхĕсем çĕршер пăт тĕш-тырă илчĕç. Сăмахран, Д. Шмаков çемйи 1.200 килограмм, М. Устинов çемйи—1.800 килограмм, Е. Вилков çемйи—2.000 килограмм ытла тырă илнĕ. Çак кунсенчех ĕçкунĕ пуçне тата пĕрер килограмм тырă валеçетпĕр.

Большевиксен партийĕ, Совет государстви ялхуçалăхне тăтăшах вăйлатса пырассишĕн тăрăшнине артель членĕсем лайăх туйса тăраççĕ. Кашни çулах пирĕн колхозра Пăрачкав МТС-ĕн икĕ тракторĕ ĕçлет. Колхозниксемпе механизаторсен хастарлăхне пула, эпир иртнĕ кĕркунне правительство кăтартса панă срокра 190 гектар çине кĕрхи культурăсем акса хăвартăмăр, 230 гектар кĕрхи çĕртме турăмăр. Çĕртме сухине 22—23 сантиметр тарăнăш сухаланă.

Партипе Совет правительстви ялхуçалăхне аталантарассишĕн тăрăшни çине ответлесе, государство умĕнчи пур обязательствăсене те срокчен пурнăçлассишĕн кĕрешетпĕр. 1951 çулшăн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана ăнăçлă тултартăмăр. Колхоз темиçе çулшăн малалла государствăна аш-какай, брынза панă. Кăçал обязательствăпа пăхнинчен сĕт-çу, çăм, çăмарта чылай ытларах парса хунă.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана иртерсе тултартăмăр. Колхозăн халĕ 50 лаша, 130 ысна, 180 сурăх, 90 пуç ытла ĕне выльăх пур, кайăк-кĕшĕк те нумай. Эпир колхоза çитес çывăх çулсенче аталантармалли план туса хатĕрлерĕмĕр. Планра тырпул тухăçлăхне пĕр вĕçĕмсĕр ӳстерсе пыма, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатма, колхозлă ял культурине малалла хăпартма палăртрăмăр. Хамăр умма 1955 çул тĕлне кашни гектартан 20-шер центнер тĕштырă, 250-шар центнер çĕрулми, 30-шар центнер çаран ути туса илме задача лартрăмăр. Çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те чылай ӳсет. Пилĕк çуллăх план вĕçленнĕ тĕле кашни ĕнерен икшер пин литр сĕт суса илмелле, кашни сурăхран 3-шер килограмм çăм касса илмелле, кашни сысна аминчен 16-шар çура, кашни çĕр сурăхран 130-шар путек илсе ӳстермелле.

Колхозниксен социализмлă ăнлануллăхĕ кунтан-кун ӳссе пырать. Эпĕ татах ĕлĕкхи чухăн, тĕттĕм яла аса илетĕп. Халĕ те астăватăп: революциччен шкулта вĕренекенсем пирĕн ялта 7—8 çынтан ытла пулман.

Халĕ пурнăç палламалла мар улшăнчĕ. Хут пĕлмеллĕхе тахçанах пĕтерне. Пирĕн колхозниксен ачисем пурте вĕренеççĕ, ялти вăтам шкулта вĕренекенсен шучĕ 500 çынна çитет. Колхозниксем хаçат-журнал нумай çырăнса илеççĕ. Пирĕн колхозăн лайăх клуб пур, унта лекцисемпе докладсем иртереççĕ, кино, концертсем пулаççĕ. Вуншар киле кăçал радио кĕртнĕ. Колхозниксем Тăван çĕршыв столици Мускав сассине итлеççĕ. Эпир ĕлĕк кун пек ырă пурнăç çинчен шухăшлама та, ĕмĕтленме те пултараймăн.

Пирĕн халăх ӳссе çĕкленчĕ, пирĕн хамăр хушăран тухнă специалистсем нумай. Хамăр ялти çамрăксенчен: Александрпа Дмитрий Бербузовсем—инженерсем, Людмила Храмовăпа Анастасия Быкова—агрономсем, Н. Тихоновпа Н. Родионов—Совет Çарĕн офицерĕсем т. ыт. те. Халĕ çамрăксем тĕрлĕ институтсенче нумай вĕренеççĕ.

«Новый путь»—çĕнĕ çул! Пирĕн колхозниксем хăйсен артелĕн ятне нитех те тĕрĕс, пĕлсе панă.

Колхозниксем çак çĕнĕ, телейлĕ пурнăça тума пулăшнăшăн Сталин юлташа чунчĕререн тав тăваççĕ. Вĕсем çĕнĕ çулта обществăллă хуçалăха, Тăван çĕршыва вăйлатассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеме пулаççĕ.

Н. ДЫДЫЧКИН,
Пăрачкав районĕнчи «Новый путь» колхоз председателĕ.

Иван МАЛГАЙ

Çĕнĕ çул каçĕ

Çулталăк тулчĕ. Халь декабрь
Иртсе юлать. Умра—январь.
Пĕрне-пĕри телей сунатпăр,
Уçатпăр çĕнĕ календарь.

Сехет вуниккĕ çапнă хыççăн,
Сĕтел тавра тăрса, эпир
Хавхаланса калатпăр уççăн:
— Салам, çĕн çул! Салам, çĕн ир!

Тăван çĕршыв—тăван аннемĕр,
Сана савса чун-чĕререн
Мухтав кӳресшĕн ĕмĕр-ĕмĕр
Хăват хушатпăр кунсерен.

Тĕреклĕ миршĕн те телейшĕн
Ĕçре ялан хĕрӳ пулса,
Пур тӳрĕ кăмăллă çынсейшĕн
Хăюллăн пырăпăр утса.

Ку çул каллех мухтавлăн иртрĕ
Хĕрӳ ĕçпе пурăннăран;
Мĕн ĕмĕтлентĕмĕр, çав çитрĕ,
Эс уншăн савăнса тăран.

Уй-хирĕ, улăхĕ, вăрманĕ
Кăçал тата илемлĕрех
Ем-ешĕл капăр тум тумланĕ,
Пуянлăхпа витсе çĕре.

Эпир хушсассăн—çумăр çутăр,
Кашлатăр тырă пусăра,
Эпир хушсан—хĕвел те култăр,
Çырла хĕрелтĕр пухчара.

Атăлпа Дон ал тытнă майăн,
Шур акăш пек пăрахутсем
Çӳреччĕр ирĕклĕн, мухтавлăн,
Çитес çĕре васкав çитсе...

Эпир тăватпăр коммунизм.
Ун патнелле çын çул хывать.
Çĕнĕ çулталăк çĕнĕ ӳсĕм
Кăтартĕ пирĕн çĕршыва.

Вырăсла-чăвашла словарь

Чăвашсен чĕлхепе литература тата истори тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн коллективĕ çĕнĕ çула хавхаланса кĕтсе илчĕ. Совет Союзĕнчи халăхсен тата ют çĕршывсенчи халăхсен чĕлхипе словарьсем кăларакан издательство декабрĕн 28-мĕшĕнче Мускавран института телеграмма ярса, вырăсла-чăвашла словарь пичетленсе тухни çинчен пĕлтерчĕ. Словарь пысăкăшĕ 58 пичет листи.

Çĕнĕ кĕнекесем

Чăваш АССР государство издательстви çакăн пек кĕнекесем пичетлесе кăларнă:

Чăвашла:

Н. В. Гоголь.—Ревизор (пилĕк пайлă комеди). 84 стр., 4.000 экз., хакĕ—2 т. 20 пус.

Профессор М. Ф. Субботин.—Çĕр хăçан тата мĕнле пуçланса кайнă. 48 стр., 3.000 экз., хакĕ 60 пус.

В. Перов.—Колхоз ĕнисемпе кӳлĕсенче пулă ĕрчетесси. 104 стр., 1.000 экз., хакĕ—1 т. 50 пус.

С. Карпов.—Ăратлă лашасене пăхса ӳстересси. Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозăн ăратлă лашасем ĕрчетекен фермăн ĕçри хăшпĕр опычĕсем. 48 стр., 1.000 экз., хакĕ—65 пус.

Вырăсла:

А. С. Отăчкин.—Книга для чтения по русскому языку для 6 класса чувашской семилетней и средней школы. 376 стр., 22.000 экз., хакĕ 3 т. 50 пус.

Г. К. Кузьминская.—Выращивание поросят. Из опыта хозяйства Чувашской государственной селекционной станции. 52 стр., 3.000 экз., хакĕ 85 пус.



1951 çулхи ноябрь уйăхĕнче Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн çип арлакан цехĕ ĕçлеме тытăннă. Рабочисемпе работницăсем ĕçе хăвăрт хăнăхса çитнĕ. Декабрь уйăхĕнче цех задание куллен тултарса пынă, декабрĕн 29-мĕшĕнче вара талăкри задание 130 процент тултарнă. Икĕ уйăхра комбинат Челябинск, Ижевск, Хусан, Саранск, Улатăр, Канаш хулисене вуншар тонна паха çип ăсатнă.

Правительство йышăннă тăрăх, комбинатăн 1951 çулхи IV-мĕш кварталта çип арлакан цехăн малтанхи хутра 15 пин йĕке вырнаçтарса лартса ĕçе ямалла пулнă. Комбинат коллективĕ çĕнĕ çула правительство задание пурнăçланипе кĕтсе илчĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çип арлакан цехра. Малти вырăнта Г. Малышева тата Т. Ерунова.

П. ОЖЕГОВПА Б. ТИМКИН фотоӳкерчĕкĕ.

Стахановла цехра

1951 çул иртрĕ. Çĕнĕ çул, пысăк çĕнтерӳсен тепĕр çулĕ пуçланчĕ. Паян кашни совет çынни хăйĕн иртнĕ çулхи ĕçне, пурнăçри савăнăçне аса илет. Вăл малашне тата хастарлăрах ĕçлеме плансем тăвать, Тăван çĕршыв ырлăхĕçпе телейĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешме сăмах парать. Социализм çĕнтернĕ çĕршыври халăх коммунизм патне тепĕр утăм тунине курса чунтан савăнать.

Кашни совет çынни халăх интересĕсемшĕн çĕнĕ çулта тата хастарлăрах ĕçлесси çинчен шухăшлать, хăйĕн юлташĕ тунă çитĕнӳ çине хăйĕн ĕçри ӳсĕмĕ çине пăхнă пек савăнса пăхать.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри инструментсем тăвакан цех коллективĕ 1951 çулта пысăк çĕнтерӳсем турĕ. Çавăншăн ăна дирекципе партком тата завком стахановла ĕçлекен цех ятне пачĕç.

Цехри рабочисем, инженерсемпе техниксем ку хисеплĕ ята Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн ырми-канми ĕçленипе илме пултарчĕç.

Заводри жюри çулталăк хушшинче висĕ хутчен цех лайăх ĕçленине палăртнă. Цех коллективне висĕ хутчен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав панă.

Рабочисем тăвакан паха изделисенчен нумайăшĕ коммунизмăн аслă стройкисене тунă çĕре, Мускаври çӳлĕ суртсене тунă çĕре каяççĕ. Вĕсен пахалăхĕ питĕ лайăх.

11 уйăхра 71 рабочи çулталăк çурăри ĕç нормине тултарнă. Производствăра малта пыракансем — стахановец-слесарьсем Мищенко, Мильман юлташсем висĕ çул çурăри ĕç нормине тултарчĕç. Висĕ çулхи производство заданине 12 çын тултарнă. Вĕсем хушшинче—Петров, Литвинский, Зимин, Щепелев, Израилит, Саваровский тата ыттисем те. Смородин, Юхтанов, Данилов, Краснов, Иванов, Федоров юлташсем тата ытти чылай рабочисем икĕ çулхи ĕç нормине тултарнă.

Ку вăл çĕнĕ меслетсемпе ĕçленинчен, ĕç çине коммунистла пăхнинчен килнĕ.

— Пирĕн уйрăмах палăрса тăракан рабочисем çук, пурте лайăх ĕçлеççĕ! — тет цех начальникĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ Евгений Васильевич Дмитренко юлташ.

Тĕрĕс калать вăл. Уйрăм рекордсемпе ĕç меслечĕсенчен массăллă рекордсем патне пыни, çĕнĕ ĕç меслечĕсене пурте вĕренсе алла илни—акă мĕнре цех коллективĕн çитĕнĕвĕ.

Хастарлă та пархатарлă ĕçре коммунизм обществин паллисем уççăн курăнаççĕ. Коммунизм обществинче ĕç телейпе савăнăç çăлкуçĕ пулать.

Цехра ĕçлекенсем тата лайăхрах ĕçлесси, лайăх продукци парасси çинчен шухăшлаççĕ.

Чаплă фрезеровщик, орденоносец, цехри парторганизаци секретарĕ Николай Александрович Королев хăйĕн юлташĕсен шухăш-кăмăлне палăртса çапла калать.

— Цехра хальхи ĕç нормисене çĕнĕрен пăхса тухаççĕ. Эпир 1952 çулта çĕнĕ, стахановла нормăсем тăрăх ĕçлĕпĕр.

Королев юлташ 1955 çул шучĕпе ĕçлет. Вăл çĕнĕ çулта тата тухăçлăрах ĕçлеме пулать.

Цехри чи лайăх участоксенчен пĕри—коммунист Георгий Николаевич Касьянов юлташ ертсе пыракан участок. Ку участок задание уйăхран уйăха иртерсе тултарать.

— Пирĕн ĕç пахалăхне кунтан кун ӳстерсе пымалла,—тет Касьянов юлташ.

Юхтанов лекальщик, Щепелев, Вахтеров, Романов, Смородинов токарьсем, Стариков слесарь тата ыттисем те пĕрремĕш сортлă продукци çеç туса кăлараççĕ.

Çамрăк токарь-стахановец Виктор Щепелов пысăк çĕкленӳпе çапла калать:

— Эпир, Иван Романов юлташпа иксĕмĕр, ДИП-200 станокпа ĕçлетпĕр. Тимĕре пысăк хăвăртлăхпа кастармалла тăвас тесе, эпир сахал мар тăрăшрăмăр. Çав-çавах тем çитмесчĕ, хăшпĕр пĕчĕк пайсем хуçăлатчĕç. Пире завод директорĕ пулăшрĕ. Вăл Мускава, «Красный пролетарий» завода кайса килчĕ. Унта вăл тимĕре мĕнле майпа хăвăрт кастарнипе паллашнă, унтан резецсем илсе килнĕ. Мускаври рабочисен меслечĕпе ĕçлеме тытăнсан çакна туйрăм: акă ăçта иккен вăл хăвăртлăх! Халĕ эпир те тимĕре пысăк хăвăртлăхпа кастаратпăр. Эпĕ Мускавран илсе килнĕ пек резецсене хамах туса хатĕрлеме вĕрентĕм. Çĕнĕ çулта çĕнĕлле ĕçлес кăмăл пысăк. Пирĕн заводри пур токарьсене те пысăк хăвăртлăхпа ĕçлеме вĕрентес килет.

Токарь çак сăмахсене шанчăклăн, çирĕппĕн калать. Щепелев юлташ ĕç нормине куллен 300 процент таран тултарса пырать. Вăл 1953 çулшăн ĕçлет. Анчах ку вăл ăна çырлахтараймасть. Щепелев юлташпа унăн юлташĕсем малашне тата хастарлăрах та тухăçлăрах ĕçлеме ĕмĕтленеççĕ.

Заводри ытти рабочисем те çĕнĕ çула пысăк шухăш-ĕмĕтпе кĕтсе илчĕç.

— Ĕç пахалăхне ӳстермелле, паха продукци çеç туса кăлармалла. 1952 çул пирĕншĕн тата пысăк çитĕнӳсен çулĕ пулмалла. Эпир нумай металл, электроэнерги перекетлĕпĕр, стахановецсен йышне ӳстерĕпĕр,—тет Дмитренко юлташ.

Лайăх шухăш-ĕмĕт! Шансах тăмалла: вĕсем хăйсен сăмахне 1952 çулта чыслăн пурнăçлĕç.

В. НЕРУБЕНКО.

Вăрман хатĕрлемелли плана тултартăмăр

Муркаш районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, Тăван çĕршыв валли йывăç ытларах хатĕрлесе парассишĕн ăмăртса ĕçлесе, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç. Декабрĕн 29-мĕшĕ тĕлне районти колхозниксемпе колхозницăсем 41.872 фестметр йывăç касса хатĕрленĕ, çулсем хĕррине 37.126 фестметр турттарса тухнă.

Çак çитĕнӳсене вĕсем партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕçсен шайне, пуçламăш парторганизацисен кĕрешӳри пултаруллăхĕпе пуçарулăхне, вĕсен массăсене организацилесе ертсе пырас рольне ӳстернипе, колхозниксене вăрман хатĕрлевĕн пĕлтерĕшĕ çинчен куллен ăнлантарса панипе тунă.

Иртнĕ çулсенче район вăрман хатĕрлемелли плана тултарас тĕлĕшпе юлса пынă. Чылай колхозсем йывăç турттарма çуна çулĕ ларсан тин тытăннă, вăрман хатĕрлекенсем улшăнса тăнă. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ хăйсен ĕçĕнче иртнĕ çулсенче пулнă йăнăшсенчен тивĕçлĕ вывод турĕç. Вăрман хатĕрлевĕн малтанхи кунĕсенчех эпир ĕçе тĕрĕс организацилесси çине, ял Совечĕсемпе колхоз правленийĕсем колхозниксене ĕçе тĕрĕс хутшăнтарасси çине уйрăмах пысăк тимлĕхне пăхрăмăр. Август уйăхĕн пуçламăшĕнче ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ ял Совечĕсемпе колхоз председателĕсен тата пуçламăш парторганизаци секретарĕсен канашлăвне иртерчĕç. Канашлура 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăç хатĕрлесси çинчен сӳтсе яврăмăр. Кашни ял Совечĕн, колхозăн тата пуçламăш парторганизацин иртнĕ çулхи ĕçне тишкерсе тухрăмăр, малашне тумалли ĕçсен планне малăртрăмăр. Канашлу итогĕсене коммунистсен пухăвĕсенче, колхоз правленийĕсенче тата колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе яврĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем Тăван çĕршывăн ответлă заданине срокчен тата иртерсе тултарма пулчĕç.

1951 çулта чылай колхозсем йывăç хатĕрлеме ытти çулхисенчен пĕр уйăх маларах тытăнчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, ĕç тухăçлăхне кунтан-кун ӳстерсе пычĕç. Уйрăмах Энгельс ячĕпе тăракан, «Сталинец», «Красное Сормово» ялхуçалăх артелĕсен паха тĕслĕхĕсене палăртмалла.

Энгельс ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. Ильин юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ А. Орлов юлташ) вăрман хатĕрлемелли плана çулсерен чыслă тултарса пырать. 1951 çулта, государство заданине илсенех, йывăç хатĕрлемелли плана тултарасси çинчен коммунистсен тата колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе явнă. Колхозниксемпе колхозницăсем вăрман хатĕрлемелли плана Октябрьти революци 34 çул тултарнă кун тĕлне тултарма, планран иртерсе 10 процент йывăç хатĕрлесе пама пулнă. Йывăç касса хатĕрлекенсен тата турттаракансен бригадисене ертсе пыма пултаруллă, ăста колхозниксене уйăрнă.

Парторганизаци колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕç туса пыма пилĕк коммуниста вăрмана янă. Парторганизаци колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлă сарнă. Коммунистсемпе комсомолецсем большевикла сăмахпа тата стахановла ĕçпе ыттисене хавхалантарса пынă. Вĕсене кура Н. Федоров, П. Захаров, П. Кузьмин колхозниксем висĕ фестметр вырăнне куллен 8—10 фестметр йывăç çул хĕррине илсе тухнă. П. Григорьевпа М. Андреев колхозниксем 40 кунта 700 фестметра яхăн йывăç çул хĕррине илсе тухнă.

Агитаторсем вĕсен паха опытне çийĕнчех сарнă. Ку вăл вăрман касас тата турттарас ĕçе хăвăртлатма пулăшнă. Колхозниксем Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе ноябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне пурнăçланă. Ун хыççăн вĕсем 273 фестметр йывăç касса хатĕрленĕ, 533 фестметр çул хĕррине илсе тухнă. Колхоз лашасемпе вăрманта ĕçленĕшĕн 20 пин тенкĕ ытла илнĕ. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ колхоза хăйсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç.

Жданов ячĕпе тăракан колхоз вăрман хатĕрлемелли плана нихăш çулта та тултарса пыман, ытти ĕçсемпе те тăтăшах юлса пынă. 1951 çулта пуçламăш парторганизаципе колхоз правленийĕ вăрман хатĕрлес ĕçе тĕрĕс организацилерĕç. Йывăç касса хатĕрлеме тата çул хĕррине турттарса кăларма яланлăх бригадăсемпе звеносем тунă, кашни звенона уйрăм задани панă. Звеносем задание срокчен тултарма обязательство йышăннă. Пĕтĕм ĕçе коммунистсемпе комсомолецсем пуçарса ертсе пынă. Бригадăсемпе звеносем мĕнле ĕçленине куллен учета илнĕ. Ĕçе çакăн пек организациленин колхоза вăрман хатĕрлемелли плана Сталинла Конституци кунĕ тĕлне иртерсе тултарма май панă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, колхоз икĕ хут ытларах йывăç касса хатĕрленĕ, висĕ хут ытларах çул хĕррине илсе тухнă.

Пуçламăш парторганизацисем ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă çĕкленĕвне тата вăйлатса пыма тăрăшрĕç. Парти райкомĕ пуçламăш парторганизацисене делянкăсенче ĕçе тĕрĕс планлама, партиллĕ-политикăллă ĕçе умра тăракан задачăсемпе тĕрĕс çыхăнтарса пыма, вĕсен кĕрешӳри пултаруллăхĕпе массăсене организацилесе ертсе пырас тĕлĕшри рольне ӳстерсе пыма пулăшрĕ. Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем вăрман хатĕрлес ĕçре политика тĕлĕшĕнчен пысăк вăй пуннине, хуçалăхпа политикăллă задачăсене пурнăçлама колхозниксен анлă массисене мобилизацилеме пултарнине лайăх кăтартса пачĕç. Çак кунсенче колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен пиллĕкмĕш пайĕ вăрманта пулчĕ. Колхозсенчи парторганизаци секретарĕсем пурте ĕçе активлă хутшăнчĕç. Массăллă-политикăллă ĕçе хăйсем ертсе пычĕç. Коммунистсем ĕçе татса паракан участоксенче йывăç касакансем е турттаракансем пулса ĕçлерĕç. Большевикла хĕрӳллĕ сăмахпа тата хăйсен хастарлă ĕçĕпе мĕнпур колхозниксене вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн пыракан кĕрешӳре пысăк çĕнтерӳсем тума хавхалантарса пычĕç. Ку тĕлĕшпе уйрăмах «Красное Сормово», Энгельс ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан, «Правда» «Сталинец», «Труд» колхозсенчи парторганизацисене палăртмалла.

«Сталинец» колхозри парторганизаци лавçăсен бригадине ертсе пыма колхоз председателĕн заместительне А. Григорьев коммуниста уйăрнă. Вăл ертсе пыракан бригада 16 лавпа ĕçлесе каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 20 кун хушшинче 109 процент тултарнă. Г. Шаров, Л. Васильев, А. Иванов колхозниксем 150—160-шар фестметр турттарса тухнă, куллен 32—35-шер тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

«Свобода», Молотов ячĕпе тăракан, «Знамя коммунизма», «Ударник» колхозсенчи парторганизацисем те коммунизмăн аслă стройкисем валли йывăç ытларах хатĕрлесе парассишĕн тăрăшса ĕçлерĕç. «Свобода» колхоз малтанхи кунсенче юлса пынă. Колхозниксем ĕç нормине тултарса пырайман. Вăрман хатĕрлевĕ вăраха кайма пуçтарнине кура, пуçламăш парторганизаци ку ыйтăва пухура сӳтсе явнă. Унта коммунистсем ĕçри çитменлĕхсене большевикла хăюлăхпа критикăланă. Пуху колхозниксен ĕçне йĕркелесе пыма партбюро секретарьне Блинов юлташа, колхоз председателĕн заместительне, партбюро членне Петровский юлташа хушнă. Партбюро секретарĕ Блинов юлташ, хăй лавçă пулса, куллен 4—4,5 фестметр йывăç турттарнă. Çав хушăрах вăл социализмлă ăмăртăва вăйлатма, колхозниксен ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшнă. Юлашки вăхăтра колхозниксем пурте ĕç нормине иртерсе тултаракан пулнă. Колхоз вăрман хатĕрлемелли плана çĕнĕ çул тĕлне пĕтĕмĕшпех тултарчĕ.

Вăрман хатĕрлес ĕçре малта пыракансен опытне сарас тата йышăннă обязательствăна срокчен пурнăçламалла тăвас тесе, ВКП(б) райкомĕн бюровĕ декабрĕн 1-мĕшĕпе декабрĕн 15-мĕшĕ хушшинче икĕ эрнелĕх иртерме йышăнчĕ. Районти ĕççыннисем çав решение тулли кăмăлпа йышăнса икĕэрнелĕхе активлă хутшăнчĕç, Тăван çĕршыва планран иртерсе йывăç хатĕрлесе пама пулчĕç. Икĕэрнелĕх вăхăтĕнче колхозниксен ĕç тухăçлăхĕ икĕ хут ӳсрĕ.

Пуçламăш парторганизацисем колхозниксене йышăннă обязательствăна срокчен пурнăçлама мобилизацилерĕç. Вăрман хатĕрлевĕн чи ответлă участокĕсенче коммунистсемпе комсомолецсем ĕçлерĕç. Колхозниксен пуçарулăхĕпе пултарулăхне вăйлатса пыма агитаторсем пысăк пулăшу пачĕç. Вĕсем стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларса тăчĕç, колхозниксем хушшинче калаçусем иртерчĕç. ВКП(б) райкомĕ массăллă-политикăллă ĕçе йĕркелесе ертсе пыма ятарласа агитбригада уйăрса ячĕ. Районти «Колхозник сасси» хаçат редакцийĕ икĕэрнелĕх çинчен уйрăм номер кăларчĕ. Çак хаçата вăрман хатĕрлекенсем патне ярса панă.

Парти райкомĕ вăрман хатĕрлес ĕç мĕнле пынине куллен тимлĕ сăнаса тăчĕ, юлса пыракан колхозсене малти рете тухма пулăшса пычĕ. Райком бюровĕн членĕсем, районти парти активĕ колхозсенче ытларах пулма тытăнчĕç, государство заданине тултарма пуçламăш парторганизацисене вырăнта ĕçлĕ пулăшу парса пычĕç. Райком пуçламăш парторганизацисемпе тачă çыхăнса ĕçлени ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе пыма май пачĕ. Çапла вара, икĕэрнелĕх хушшинче йывăç касмалли плана 10 колхоз, çул хĕррине илсе тухмалли плана 7 колхоз тултарчĕç.

Халăх сучĕсен суйлавĕ вăхăтĕнче коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ çĕнĕ çĕнтерӳ туни колхоз хресченĕсен политикăллă тата производствăллă активлăхне тата çӳле çĕклерĕ. Энгельс ячĕпе тăракан, «Красное Сормово», Жданов ячĕпе тăракан, «Правда», «Труд» колхозсем планран иртерсе 10 процент чухлĕ йывăç хатĕрлеме обязательство илчĕç.

Районти колхозниксемпе колхозницăсем, вăрман хатĕрлемелли стахановла вунăкунлăха активлă хутшăнса, çĕнĕ обязательствăсем йышăнчĕç. Вăрмана çĕнĕрен чылай колхозниксем кайрĕç. Юлашки кунсенче вăрманта пурĕ пин çынна яхăн ĕçлерĕ. Вăл шутра коммунистсемпе комсомолецсем 250 çынна яхăн шутланаççĕ. Вĕсем колхозниксене йышăннă обязательствăна чыслă пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хавхалантарчĕç. Район вунăкунлăхăн малтанхи пилĕк кунĕнче çул хĕррине йывăç илсе тухмалли сезонти плана 13,6 процент чухлĕ тултарчĕ. Районти колхозсем ĕçе кунтан-кун хăвăртлатса пырса, Тăван çĕршывăн ответлă заданине республикăра чи малтан пурнăçларĕç.

Вăрман хатĕрлемелли плана ăнăçлă тултарас ĕçре районти парторганизацие комсомолецсем пысăк пулăшу пачĕç. Комсомол организацийĕсем пуçарнипе вăрман хатĕрленĕ çĕрте комсомолецсемпе çамрăксен 21 бригади ĕçлерĕ.

Районти колхозниксемпе колхозницăсем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ. Вĕсем коммунизмăн аслă стройкисем валли планран иртерсе 1.200 фестметр йывăç касса хатĕрлеме, 1.500 фестметр çул хĕррине илсе тухма сăмах пачĕç. Вĕсем, районти парторганизаци ертсе пынипе, социализмлă çĕршыв вăй-хăватне тĕреклетес шухăш-кăмăлпа ĕçлесе, хăйсем йышăннă çĕнĕ обязательствăна та ăнăçлă пурнăça кĕртĕç.

М. ЗАЙЦЕВ,
ВКП(б) Муркаш райкомĕн секретарĕ.

ТАНТĂШСЕНЕ

Александр АЛГА

Эпир çĕнĕ çул касĕ, Кремль куранчĕсем вуниккĕ çапнă хушăра, ура çинче тăратпăр. Ку вăхăтра кăмăла çĕклентерекен, çав вăхăтрах тата çынна таран шухăша яракан самант. Çапла, тантăшсем, иртнĕ кас эпĕ, Çĕнĕ çул касĕ, пĕр самант хушшинчех темĕн те аса илтĕм. Аса илтĕм те—çав вăхăтра хам мĕн шухăшланине калаcа парас терĕм.

Эпĕ çакна лайăх астăватăп. Виçĕ енчен хÿтĕлекен сăрт айĕнче, пĕр пĕчĕк сырма хĕрринче ларакан ялта, Кăнна Кушкинче, эпир Çĕнĕ çула кĕтсе илме пуçтарăннăччĕ. Эпир тин çуртла çĕнĕ самапара вĕренекен шкул ачисемччĕ ун чухне. Пирĕн аннесенчен пĕри, пурсăмăра та пуçăмăрсенчен шăлса, çапла каларĕ: «Сирĕншĕн çул уçă ĕнтĕ, ачамăрсем; пирĕн пек тĕттĕмре ан пурăнăр, вĕренĕр, аслă çынсем пулăр. Çĕнĕ çулта—çĕнĕ телей!»

Унтанпа пайтах çулсем иртсе кайрĕç, манăн асран кайми тантăшсем. Эпир, кашни иртен çула мухтавлăн ăсатса, кашни Çĕнĕ çула пысăк та сутă ĕмĕтсемпе кĕтсе илетпĕр. Çĕнĕ çул касĕсенче: хамăр ÿссе çитĕнмелли çулсенче—ăнăçлă вĕренсе тухассишĕн, вĕренсе тухса ĕç умне тăрсан—ĕçĕмĕрти çĕнĕ çĕнтерÿсемшĕн, хăрушă вăрçă вут-çулăмĕ çĕкленсе тухсан—Тăван çĕршывăмăрăн ирсĕр тăшманне хăвăртрах тĕп тăвассишĕн чунтан-чĕререн ĕмĕтленетпĕр, тупа туса, «Çĕнĕ çул—çĕнĕ телей!» тесе, тулли курка çĕклетпĕр.

Эпир ĕмĕтленни—совет патриочĕсен ĕмĕчĕ—яланах пурнăçланса пычĕ: лайăх вĕренсе тухрăмăр, тăрăшса ĕçлени çĕршыва хăватне ÿстертĕмĕр, вăрçăра тăшмана çĕнтертĕмĕр. Кашни çул—пирĕн ÿсĕм пулчĕ, кашни çулах телей те пысăкланса пычĕ. Мĕншĕн çапла вăл? Мĕншĕн тесен паттăр та пултаруллă, ырă та аслă совет халăхне Ленин—Сталинăн аслă партийĕ çултан-çул малалла, çĕнерен-çĕнĕ çĕнтерÿсем патне ăслăн ертсе пырать.

Эпир, пĕр ялта ÿснĕ тантăшăмсем, Çак Çĕнĕ çула пĕрле пухăнса кĕтсе илеймерĕмĕр. Ÿпкелешес мар уншăн. «Ăçта эсир пулнă?» тесе каласшăн мар эпĕ. Мĕншĕн тесен çак çулта эсир ăçта пулнине эпĕ яланах лайăх пĕлсе тăнă. Çуллахи кунсенче ялсенче, хирсенче пулнă чух, куçăм умне вĕçĕ-хĕррисĕр пуян хир-улăхсем тухса тăрасçĕ-и, — вĕсем çине тÿпери çĕнтерÿсенчен те иртерсе ялтăртатаççĕ-и—«кусене ман тантăшăмсем те тунă» тесе эп чунтан хĕпĕртетĕп. Е пысăк хуласенче якăр пĕлĕте çити кармашакан, пăхса тăранайми илемлĕ çуртсене куратăп-и,—«ку çуртсене ман тантăшсем те тунă» тесе савнатăп. Тата правительство паракан наградăсене кам-кам илнине вуласа тухатăп та, тантăшсен ятне курсан — кăмăлăм çунатланса каять.

Нумай пулмасть эпĕ Совет Çарĕнчен, хам тантăшăмран, çыру илтĕм. Мĕн тери ÿснĕ эпир, малтанхи çул уçă пĕрле çул касне иртернĕ юлташсем!.. Çĕршывра коммунизмăн аслă стройкисем çитĕнеççĕ. Эпир пурте коммунизм тăватпăр. Çавăншăн, этемлĕхĕн сутăран-сутă ĕмĕчĕшĕн, тăрăшса ĕçлетпĕр. Эпир çын пулса çитнĕ. Эпир — аслăрăн та аслă çĕршывăн, çуллен чечеклĕ сад пек илемленсе пыракан, çуллен хăватăран та хăватлă çĕкленекен çĕршывăн хуçисем! Камăн пултăр çакăн пек пысăкран та пысăк телей!

Тĕнчере пурăнакансем те пирĕн пек пурнăлаймаççĕ-ха. Телейлĕ пурнăç çинчен савăнса ĕмĕтленес вырăнне хурлăх курсан тăвансем те пур. Пĕлетпĕр çак çĕнĕ çул касне пирĕн тăшмансем мĕнле иртернине. Çĕнĕ çул касĕ Америка империалисчĕсем Корея çине бомбăсем пăрахнине те манар мар. Çав çынсемсен, çĕнĕ çул касĕ черккисене ăрех тултарчĕç пулĕ, анчах кусемшĕн вĕсем ăрех мар—юн курасçĕ: юн вĕсемшĕн ăрехрен темиçе хут паха. Анчах çав пусмăрçăсенчен хăтăлса ирĕклĕн сывлас илемлĕн çĕршывсенче те ĕçсыннисем, ырă кăмăллă çынсем, çак кас телейшĕн курка çĕклеççĕ. Вĕсем «сĕнтерессĕх! Мĕншĕн тесен вĕсене миршĕн пыракан кĕрешÿре Совет Союзĕ—пирĕн ытараймми чаплă Тăван çĕршывăмăр ертсе пырать.

Эпир—телейлĕ, савнă тантăшăмсем! Çĕклер-ха, эппин, куç пек тулли куркамăрсене—Тăван çĕршывшăн, унăн хĕвелĕшĕн—аслă Сталиншăн!

ПИОНЕРСЕН ÇУРТĔНЧЕ

Телейлĕ те савăнăçлă пурăнаççĕ пирĕн çĕршыври ачасем. Партипе правительство, аслă Сталин ачасемшĕн куллен тăрăшнипе ачасене лайăх вĕренме, канма, Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн ĕçлекен хастарлă çынсем пулса ÿсме условисем туса панă. Ачасемшĕн пур шкулсен алăкĕсем те уçă, вĕрен, юратнă профессие алла ил.

Ачасем валли чи илемлĕ те пысăк çуртсенче библиотекăсем, пионерсен дворецĕсем, çамрăк техниксемпе юннатсен станцийĕсем ĕçлеççĕ. Сталионсен, катоксен алăкĕсем шкул ачисемшĕн яланах уçă. Çуллахи вăхăтра кашни районтах пионерсен лагерĕсенче çĕршер ача канать, нумайăшĕ походсемпе экскурсисенче пулса сывлăхĕсене тĕреклетеççĕ.

Шупашкарти пионерсен çурчĕ хулари пысăк та илемлĕ çуртра вырнаçнă. Унта кулленех ачасем нумай пулаççĕ. Вĕсем çамрăк художниксен, музыкантсен, математиксен, техниксен кружокĕсенче, хореографи, драма, хор кружокĕсенче тата ытти тĕрлĕ кружоксенче вĕренсе хăйсен пултарулăхĕсене ÿстереççĕ.

Çĕнĕ çул кунĕсенче кунта ĕлка, бал-маскарадсем ирттереççĕ. Вĕсенче хулари шкулсенче вĕренекенсем, тăлăх ачасен çуртĕсенче пурăнакансем, ялсенчен килнĕ хăнасем нумай пулаççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарти пионерсен çурчĕ çумĕнчи хореографи студийĕнче вĕренекен хĕрачасем çĕнĕ ташă вĕренеççĕ.

М. ЕГОРОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Çĕмĕрле комбиначĕн продукцине ырлаççĕ

Çĕмĕрле комбиначĕ туса кăларакан сĕтел-пукан, шкаф, диван, матрац тата ыттисем те пĕтĕм çĕршыва саланаççĕ. Вĕсен пахалăхĕ ĕççыннисен кăмăлне тивĕçтерет. Ĕççыннисем сĕтел-пукан туяннă хыççăн, хăйсен шухăш-кăмăлне комбинатри рабочисене çырса пĕлтереççĕ.

1951 çулта комбинат коллективĕ çĕнĕ япала—кĕпе-тумтир çакмалли шкафсем туса кăларма тытăнчĕ.

Кăçал Мускав хулине ун пек шкафсем 6 миллион тенкĕлĕх ытла ăсатнă.

Кăçал тунă шкафсенчен ытларах пайне Çĕпĕре тата Вăтам Азине янă. Çавăнпа çырусем унтан ытларах килеççĕ.

— Сирĕн комбинатран янă шкафсем пирĕн пата пурте тĕрĕс-тĕкĕл çитрĕç: нимĕн те ванман, ниçта пĕр шăйрăк çук,—пĕлтерет Ашхабадран универмаг директорĕн заместителĕ.—Вĕсен пахалăхĕпе конструкцийĕ, паллах, сирĕн ĕçри çитĕнÿсем çинчен пĕлтереççĕ.

Новосибирск хулинчен Лидия Емельяновна Рыжик комбинатри рабочисене çапла çырса пĕлтерет:

— Новосибирск универмагĕнче эпĕ çак кунсенче эсир туса кăларнă кĕпе-тумтир хумалли шкаф туянтăм. Шкаф чипер, усă курма питĕ вăхăтлă, пахалăхĕ пирки вара калама та çук. Çакăн пек паха шкаф тунăшăн сирĕн мастерсене, рабочисене пысăк тав. Сире йÿнĕрех те лайăх пахалăхлă япаласем ытларах туса кăларма ырă сунатăп.

Паллах, пысăк хулана шутлă пыракан япалана чылайăшĕ труках туянаймасть. Ун пек чухне совет çынни çыру çырма ларать.

— Паян пирĕн юлташăмăр Федоров сирĕн комбинатра тунă шкафа туянчĕ. Эпирăна пăхса ытараймастпăр, — теççĕ хăйсен çырăвĕнче Омск çыннисем—Федоров, Блинова, Монастырев, Мицаева юлташсем. Вĕсем те çавăн пек шкаф туянасшăн.

Çĕмĕрлерен Çĕпĕре вара çакăн пек çыру каять:

— Эсир ыйтнине тивĕçтерес тесе, Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ Омскри горпромторг адресĕпе шкафсем тиесе ярать. Ешĕксем çинче сирĕн хушаматăрсене çырнă. Шкафсемпе пĕрле пыракан уйрăм ещĕксенче тĕкĕрсем пулаççĕ. Горпромторгран шкафсене заказ панă юлташсене сутма ыйтатпăр.

Комбинат адресĕпе кашни кунах çĕршывăн тĕрлĕ хулисенчен — Ташкентран, Челябинскран, Кемеровăран, Сталинăран, Магнитогорскран тата ытти çĕртен те çакăн пек çырусем килеççĕ. Вĕсене часчасах комбинатри нумай тиражлă хаçат страницисенче вулама пулать. Чылай чухне агитаторсем рабочисене вуласа параççĕ, сÿтсе яваççĕ.

Вĕсен ĕçне совет çыннисем хаклани рабочисене савăнтарать тата тăрăшарах ĕçлеме, продукци пахалăхĕшĕн ытларах кĕрешме, çапла вара предприяти чысне çÿлте тытса пыма хавхалантарать.

Е. АФАНАСЬЕВ.
(Хамăр корр.).

Çĕнĕ çитĕнÿсем тăвăпăр

1951 çулта Йĕпреç вăрманпромхозĕн коллективĕ чылай çитĕнÿсем турĕ. Вăл коммунизмăн аслă стройкисен, çĕр кăмрăкĕпе металлурги промышленноçĕн заказĕсене чыслă пурнăçлассишĕн кĕрешрĕ. Коллективра пуян техникăпа лайăх усă курассишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне чакарассишĕн, ĕçе юрăхлă йывăç ытларах хатĕрлессишĕн социализмлă ăмăрту вăйланса пырать.

Вуншар рабочи çулталăкри ĕç нормине ирттерсе тултарчĕç. Çулталăкри ĕç нормине Барышев, Кутузов, Малкин шоферсем 140 процента яхăн, Новиков лавçă, Варганов грузчик—160 процент тултарчĕç. Вдовин грузчик тата пысăкрах çĕнтерÿ турĕ: вăл çулталăкри ĕç нормине 180 процент тултарчĕ.

Партипе правительство вăрман промышленноçне пысăка хурса хакласçĕ, ăна пуян техникăпа хĕçпăшаллантараççĕ, рабочисем валли тухăçлă ĕçлеме, лайăх пурăнма мĕн кирлине пурне те уйăрса параççĕ. Государство заданине чыслă пурнăçласси механизмсемпе тулли усă курнинчен, малта пыракансен опытне сарнинчен, производствăна тĕрĕс йĕркелесе ертсе пынинчен килет. 1951 çулта пирĕн коллективăн пуçарулăхĕ ÿснине механизмсене лайăхрах ĕçлеттернинчен курма пулать.

Вăрманпромхоз кашни электростанци пуçне 21 пин фестметр йывăç касса хатĕрлерĕ, урăхла каласан, нормăна 140 процент тултарчĕ. Электропăчкăпа йывăç касса хатĕрлекен рабочисем Тăван çĕршыва çулталăкри планран ирттерсе 8 пин фестметр йывăç касса пачĕç. Автомашинăсемпе тата ытти механизмсемпе усă курасси те чылай лайăхланчĕ. Шоферсем çулталăкри планран ирттерсе 5 пин фестметр турттарса кăларчĕç.

1951 çул пуçламăшĕнче пирĕн коллектив çулталăкри плана срокчен тултарма сăмах пачĕ. Парторганизаци куллен ертсе пынипе вăл хăйĕн обязательствине чыслă пурнăçларĕ. Вăрманпромхоз каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана срокчен тата ирттерсе тултарчĕ. Декабрĕн 28-мĕшĕ тĕлне йывăç турттарса кăлармалли çулталăкри плана та ăнăçлă тултарнă, Куйбышев гидроэлектростанцине тунă çĕре планран ирттерсе пиншер шпал ăсатнă. Вăрманпромхоз 1951 çулхи плана, пĕтĕмĕшпе илсен, 106 процент ытла тултарчĕ, планран ирттерсе 1,1 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем перекетлĕх режимне çирĕплетессишĕн, тупăш ытларах тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Вăрман промышленноçĕнче тупăшлăха ÿстермелли чи пысăк майсенчен пĕри вăл—ĕçе юрăхлă йывăç ытларах хатĕрлени пулать. Çулталăк хушшинче пирĕн коллектив ĕçе юрăхлă йывăç нормăран ирттерсе 3 пин фестметр е 150 вагон хатĕрлерĕ. Ĕçе юрăхлă йывăç вут-шанкăран хаклăрах. Уйăрса панă вăрманпа лайăх усă курса, вăрманпромхоз 200 пин тенкĕ ытла перекетлерĕ. Тĕрлĕ тăкаксене, продукцин хăйне ларакан хакне чакарса, производствăра пурĕ 0,5 миллион тенкĕ ытла перекетленĕ.

1951 çулта рабочисен пурнăçпа йăла тата культура условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. 60 çын пурăнмалăх икĕ общежити, икĕ магазин, шкул туса лартнă. Черноречемски клубра вуламалли зал уçнă. Чылай рабочисем, государство пулăшнипе, хăйсем валли пурăнмалли çуртсем лартрĕç. Кадрсен политикăллă тата техникăллă пĕлĕвне ÿстерес ĕçе те япăх мар йĕркеленĕ.

1952 çулта вăрманпромхоз коллективĕ умĕнче тата ответлăрах та пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Унăн халăх хуçалăхĕ валли 1951 çулхинчен чылай ытларах йывăç хатĕрлесе памалла. Ку задачăна чыслă пурнăçлама тĕплĕ хатĕрленнĕ. 1952 çул пирĕн коллектившăн уйрăмах паллă тапхăр пулĕ. Правительство йышăнăçĕ тăрăх, пирĕн малашне йывăç хатĕрлес ĕçе пĕтĕмĕшпе механизмсемпе туса пымалла. Халĕ вăрманпромхозăн йывăça автомашинăсемпе вагонсем çине тиесе пушатма, йывăça сыпăлама тата турттарса кăларма механизмсем çитеĕклĕ. 1952 çулта каснă йывăça çул хĕррине илсе кăларма тракторсем уйăрса пама палăртнă. Вĕсене туянсан вăрманпромхоз каснă йывăça турттарса кăларас ĕçе пĕтĕмĕшпех механизмсемпе туса пыма пултарать.

Çĕнĕ çулта çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвассишĕн коллективра социализмлă ăмăртăва çĕнĕ хăватпа сарăпăр.

Я. ЦВЕТКОВ,
Йĕпреç вăрманпромхоз директорĕ.

Телейлĕ çемье

ИШЛЕЙ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пуян та культурăллă пурăнаççĕ. Колхозлă ял çамрăкĕсем çичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсенче, аслă шкулсенче те йышлă вĕренеççĕ, нумайăшĕ çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче промышленность предприятийĕсенче ĕçлеççĕ.

Мартын Эрик çемйине илер. Эрик юлташ колхоз пуçланнăранпах бригадир пулса ĕçлет. Вăл Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ. Унăн арăмĕ Мария Ивановна 9 ача пăхса ÿстернĕ, правительство наградине илме тивĕçлĕ пулнă. Вĕсен аслă хĕрĕ Елизавета Чурачăкри промартельте бухгалтер пулса, Анна—Шупашкарта «Заготскот» кантурĕнче бухгалтер пулса, Нина—типографире ĕçлеççĕ.

Николай ятлă ывăлĕ Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнчен вĕренсе тухнă, Михаил—Шупашкарта, çĕвĕ çĕлекен мастер пулса ĕçлет.

— Телейлĕ совет саманинче ĕмĕр-ĕмĕр пурăнас килет,—тет М. Эрик юлташ. — Манăн ачасем телейлĕ çитĕнеççĕ, Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн хастарлă ĕçлеççĕ. Телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панăшăн аслă Сталина чунтан-чĕререн тав тăватăп. Çĕнĕ çулта тата хастарлăрах ĕçлеме сăмах паратăп,—тет ватă колхозник савăнса.

С. БАРАНОВА.

Плана ирттерсе тултарнă

Шупашкар, Канаш хулисенчи, Калинино, Шăхасан, Вăрнар районĕсенчи Госстрах инспекцийĕсем ирĕклĕ страховани енĕпе укçа-тенкĕ пухмалли плана срокчен ирттерсе тултарнă.

Калинино районĕнчи Госстрах инспекцийĕ декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне IV-мĕш квартал планне 148,6 процент, Шăхасан районĕнчи Госстрах инспекцийĕ 128,5 процент тултарнă.

Чурачăк, Йĕпреç районĕсенчи Госстрах инспекцийĕсем те хăйсен ĕçĕсенче паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Пирĕн ĕмĕт пурнăçланĕ

Çурçĕр çитрĕ. Кремль куранчĕсем янраса кайрĕç. Çĕр чăмăрĕ тавра Совет Союзĕн гимнĕн аслă кĕвви шăранчĕ. 1952 çул пуçланчĕ. Совет халăхĕшĕн савăнăçлă çул! Çĕнĕ çулта совет халăхĕ хăйĕн мухтавлă ĕçĕсене—коммунизм строительствине çĕнĕ вăйпа хăвăртлатĕ.

1952 çула кĕтсе илсе, совет çыннисем Тăван çĕршывшăн, вăл тунă çитĕнÿсемшĕн чун-чĕререн хĕпĕртеççĕ, тулăх та телейлĕ пурнăç туса панăшăн мир ялавне çÿлте тытса пыракан Сталин юлташа тав тăваççĕ.

Эпĕ совет учителĕ. Учительсем умĕнче—пысăк та ответлă ĕç. Ÿссе çитĕнекен ăрăва коммунистла воспитани парасси, ачасене коммунизмăн хастарлă строителĕсем пулма хатĕрлесси хисеплĕ ĕç пулса тăрать.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче эпĕ вĕрентекен предметпа вĕренекенсем пурте ĕлкĕрсе пычĕç. Кăçал та, Сталин юлташ чĕлхе ыйтăвĕсем çинчен вĕрентни тăрăх ĕçлесе, вĕренÿ ĕçĕнче тата пысăкрах çитĕнÿсем тăвас ĕмĕтсемпе çĕнĕ çула савăнăçлăн кĕтсе илетĕп.

Аслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр И. В. Сталин ертсе пыракан Тăван çĕршывра пурăнма, ĕçлеме савăнăçлă. Телейлĕ саманара ÿссе çитĕнеççĕ пирĕн çамрăксем. Ленин—Сталин партийĕ, Совет правительстви çамрăксен ĕмĕчĕсене пурнăçлама мĕн кирлине пĕтĕмпех туса панă. Анчах империализмла çĕлен калтасем çамрăксен ĕмĕчĕсене татасшăн чашкăраççĕ, урса кайсах вĕсем çĕнĕ вăрçа хатĕрленеççĕ. Урнă тăшмансем каллех хăйсен тискер аллисене пирĕн çине хума шухăшлаççĕ.

Çук! Вăл пулмĕ! Иртнĕ çул çĕр çинчи пĕтĕм ырă кăмăллă халăх вăрçа хирĕç татăклă сăмах каларĕ, вăрçа хирĕç кĕрешĕве тухса, пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ чĕнсе калани çине 600 миллиона яхăн çын алă пусрĕ.

Аслă Сталин ертсе пынипе совет çыннисем çĕнĕ çулта çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ тăвĕç. Пирĕн ĕмĕт—мирлĕ пурнăç, коммунизмлă общество. Вăл пурнăçланĕ.

В. АНТОНОВ,
Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ.
Первомайски районĕ, Çĕньял ялĕ.

Коммунизм ĕçĕ çĕнтерет!

Çĕнĕ çул пуçламăшĕ вăл календарь пуçламăшĕ кăна мар. Çак кун эпир утса тухнă çул çине çаврăнса пăхатпăр, малалла пуласси çине тинкерсе пăхатпăр.

Ĕлĕк те, революциччен, çĕнĕ çул кунĕнче çынсем пĕрне-пĕри телей суннă, анчах капитализмăн тискер тĕнчинче простой çын мĕнле телей кĕтме пултарнă-ха? Харампырсем хăйсен мулĕпе иртĕнсе пурăннă, çав вăхăтрах халăх, ĕççыннисем—суклăхран тухайман çĕрте мĕнле телей пулма пултартăр вара?

Анчах та çынсем малашлăх лайăх пуласса шаннă, çав малашлăхшăн кĕрешнĕ. Капитал пуç пулса тăракан çĕршывсенче халĕ те çавăн пекех кĕрешеççĕ.

Шăп çур ĕмĕр каярах чаплă ĕç пулса иртнĕ. Батумире пĕр çуртра çынсем Çĕнĕ çула кĕтсе илме пухăннă. Вĕсем хушшинче Сталин юлташ пулнă. Çĕнĕ çулхи кун ирхине шуçăм хĕрелме тытăннă. Сталин юлташ çапла каланă:

— Кĕçех хĕвел тухать. Ку хĕвел пирĕншĕн çутатса тăрĕ.

Йывăр вăхăтра каланă пулнă çак сăмахсене. Çĕнĕ çула кĕтсе илме пухăннă çынсен чĕрине çав сăмахсем кĕрсе вырнаçнă. Малашлăха генилле курса тăракан, простой çынна, унăн тĕрĕс ĕçне чун-чĕререн шанакан çын кăна малашлăх çинчен, кайран, 17 çул иртсен, пурнăçа кĕнĕ ĕç çинчен малтанах çавăн пек каласа пама пултарнă.

Революци çулпуçĕсем Ленинпа Сталин ертсе пынипе халăх телейшĕн, хĕвелшĕн çапăçнă. Пирĕн çынсемшĕн хĕвел 1917 çулхи октябрьте йăлкăшса çуталчĕ, унтанпа пĕр сÿнмесĕр совет çĕрĕ çине хăйĕн пайăркисене сапать.

Эпир мухтавлăн çапла калама пултаратпăр: иртсе кайнă çул—коммунизма пирĕн пата тата ытларах çывхартнă çул пулчĕ. Çакна май Совет влаçĕ туса хунă хыççăн малтанхи çулсенче аслă Ленин каланă сăмахсем ирĕксĕрех аса килеççĕ. Вăл çапла каланă: Октябрьти революци туса хунă строй производительнăй вăйсене калама çук хăвăрт аталантарма, кашнипех социализмăн хăватне кăтартса пама май парать. 1951 çул, XX-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчи малтанхи çул, çакна тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ: социализм çĕршывĕн çулĕ—малалла каймалли, чечекленмелли çул, капитализмлă çĕршывсен çулĕ вара—экономикăпа вăрçă катастрофисен çулĕ, халăх массисем чухăнланса пыракан çул.

Сталин юлташ кăтартса панă тăрăх эпир коммунизмăн материальнăй никĕсне тăватпăр. Коммунизм, этемлĕхĕн чи лайăх çыннисем ĕмĕрсем хушши ĕмĕтленни, халĕ ĕнтĕ таçта инçетре мар, совет çыннисем ăна хăйсем тăваççĕ.

Иртсе кайнă çулăн итогĕсем çăннипех те питех те чаплă! Çакна май танлаштарса пăхас килет. Выçлăх çулĕ пулнă 1920 çул. Çамрăксем ун çинчен кĕнекесенчен, ватă çынсем каланинчен кăна пĕлеççĕ. «Россия тĕтрелĕхре» тенĕ ун чухне пирĕн çĕршыв çинчен Англи писателĕ Герберт Уэльс. Вăл пирĕн пата темиçе кунлăха, ĕççĕр çÿрекен турист пек килсе кайнă. Вăл вăхăтра Гоэлро планне, çĕршыва электрификацилемелли плана хатĕрленĕ, Ленин ăна партин иккĕмĕш программи, тесе ят панă. Гоэлро планĕпе 15 çул хушшинче 30 электростанци тума палăртнă, вĕсен хăвачĕ пĕр миллион çурă киловатт чухлĕ пулмалла пулнă...

Ку плана совет халăхĕ ирттерсе тултарчĕ.

Пĕр миллион çурă киловатт—15 çул хушшинче... Иртнĕ çулта вара совет çыннисем пурĕ виçĕ миллион киловатт паракан электростанцисем туса лартнă! Пĕр çул хушшинче—Гоэлрон икĕ планĕ е 50 Волховстрой!

Социализмлă промышленноçăн техникăллă шайĕ татах та ÿсрĕ. Пирĕн чаплă заводсенче ку таранччен тĕнчере курман турбинăсем, çĕр чавмалли хăватлă снарядсем тата ытти чаплă машинăсем туса кăларма тытăннă.

Иртсе кайнă çул социализмлă ялхуçалăхĕ малалла çитĕнÿсем тунипе паллă пулса тăрать. Промышленность ялхуçалăхне чи лайăх техника ытлăн-çитлĕн парса тăрать. Хресчен ĕçĕ ытларах та ытларах индустриллĕ ĕç евĕрлĕ пулса пырать. Ку тĕлĕшпе иртнĕ çулта уйрăмах нумай ырă тĕслĕхсем пулчĕç. Сăмахран, тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте поток меслечĕ текен майпа анлă усă курнă.

Наука, пуян техника нихçан курман вăйлă тырпул туса илме май парать, хресчене çутçанталăк хуçи туса хурать, ăна стихийлă вăйсенчен хăтарать.

Иртнĕ çулта çĕршер пин гектар çинче вăрман тăрăхĕсем тума йывăççем лартнă, пиншер пĕвесемпе кÿлĕсем тунă. Çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла аслă план тăрăх типĕ çанталăкпа вĕри çилсене хирĕç пĕтĕм вăй-хăватпа наступлени туса пынă.

Питех те пысăк гидроэлектростанцисем тата çĕре шăвармалли системăсем тунă май строительствăри хавхалану нихçанхинчен ытларах ÿсрĕ. Атăл, Днепр, Дон çинче, Туркменире питех те пысăк стройкăсем тума тытăнни эпир коммунизм патне çывхарса пынă вăхăтра пурăннине пĕлтерет. Этемлĕх историйĕнче пулман çак пысăк стройкăсенче эпир наукăпа техника тата культура тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсем питех те лайăх палăрчĕç.

Совет çыннисен творчествăллă вăйхăватне пирĕн юратнă столицăра—Мускавра çÿлĕ çуртсем туни те яр-уççăн кăтартса тăрать. Наука дворецĕ—Ленин тăвĕсем çинчи Мускав университечĕн чаплă çурчĕ кашни çынна хăйĕн пысăкăшĕпе кăна мар, хăйĕн ырă тĕллевĕпе те тĕлĕнтерсе савăнтарать. Ку тĕллев—совет халăхĕн культурине, тĕнчери чи малта пыракан совет наукине малалла аталантарасси.

Пирĕн кашни хулара, кашни ялта строительство пырать. Вĕçĕ-хĕррисĕр анлă пирĕн çĕршывăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çитиччен аслă стройка сасси янраса тăрать. Çакă вăл пире савăнтарать, Тăван çĕршыв мухтавĕшĕн тата тăрăшарах ĕçлеме хавхалантарать.

Аслă тĕллев аслă вăй çуратать. Коммунизм—пирĕн тĕллев. Çакăнтан пысăкрах, ырăрах урăх мĕнле тĕллев пулĕ? Коммунизм патне çитме тăрăшни, совет çыннисене вăйя шеллемесĕр ĕçлеме, пĕтĕм халăха социализмла ăмăртса ĕçлеме хавхалантарать. Çак ăмăртура иртнĕ çулта стахановла ĕçĕн çĕнĕ формисем çуралчĕç. Мария Левченко тата Григорий Муханов производствăра кашни операцин хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн ăмăрту пуçарма сĕнчĕç. Антонина Жандаровăпа Ольга Агафонова производствăра кашни операцие питех те паха пурнăçлассишĕн ăмăрту пуçарчĕç. Горький хулинчи Катаевпа Загорный производствăра кашни операцие тума ĕç сахалтарах пĕтерессишĕн кĕрешÿ пуçарса ячĕç.

Çаксем вĕсем пурте пирĕн совет стройĕн вăй-хăватне, пирĕн тăван большевиксен партийĕн ăслăлăхĕпе çирĕплĕхне, аслă Сталин генилле ертсе пынинĕ кăтартса параççĕ.

Эпир, совет çыннисем, 1952 çула савăнăçлăн кĕтсе илетпĕр, мĕншĕн тесен çак çул эпир малалла, коммунизм патне каймалли çул пулса тăрать, çак çул вăл хамăрăн пур творчествăллă ĕçре те нихçан курман çĕнĕ çитĕнÿсем илсе килет.

Эпир, совет çыннисем, аслă Китайри, халăх демократи çĕршывĕсенчи, Германи демократиллĕ республикинчи халăхсемпе пĕр пулса, миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешекен мĕнпур этемлĕхпе пĕрле пĕр пулса çĕнĕ, 1952 çула савăнăçлă кĕтсе илетпĕр.

Ĕлĕк çапла каланă: телейлĕ çăлтăр курăннă кун çуралнă çын телейлĕ, тенĕ. Анчах та «телейлĕ» çăлтăрсем тÿпере нумаях пулман, вĕсем халăх юнĕпе пуякан çынсемшĕн кăна пулнă. Çавăн пек самăрăлнă юнĕçенсем халĕ те çаплах Америкăра, Англире, Францире тата ытти çĕршывсенче пуç пулса тăраççĕ. Çав империалистсем çĕнĕ вăрçă çинчен ĕмĕтленеççĕ. Социализм çĕршывĕ çинчен асăнни те çав çынсене тарăхтарать, сехĕрлентерет. Мире сыхласа хăварассишĕн кĕрешекен халăхсем ирĕке юратакан Корея халăхĕн юнне юхтаракан Америкăпа Англи империалисчĕсене кураймаççĕ, ылханаççĕ.

Капитализмлă çĕршывсенче ĕççĕр юлнă çынсен хисепĕ ÿссе пырать, ĕççыннисем чухăнланса пыраççĕ. Капитализм экономика тĕлĕшĕнчен путланасси патне пырать.

Лондонра тухакан хаçатсем çапла çыраççĕ: çĕнĕ çул уявĕ тĕлне пĕтĕм Англире ĕç биржисене ĕççĕр юлнă çынсем çĕнĕрен нумай пыраççĕ. «Дейли уоркер» хаçат çапла çырать: «Çапла шутлаççĕ: Англин çурçĕр хĕвеланăçĕнчи ĕç биржисен кăна пир-авăр промышленноçĕнчи 206 пин ĕççĕр юлнă рабочие регистрацилеме тивет, мĕншĕн тесен çав предприятисене хупаççĕ».

Маршалл планне йышăннă Англире ĕççыннисем 1952 çула çапла кĕтсе илеççĕ. Çемьене тăрантаракан рабочие ĕçрен кăларса ыватнă хыççăн рабочи çемйинĕ мĕнле хуйхă тивнине тавçăрса илме те хĕн.

США-ра ĕççыннисем Çĕнĕ çула ăçтан «телейлĕ» кĕтсе илме пултарччăр-ха? Унга Трумэн президент ултă çул та икĕ уйăх хушшинче кăна, ун умĕн пулнă 31 президент 156 çул хушшинче пурĕ пĕрле налог пухнинчен ытларах налог (çĕнĕ вăрçа хатĕрленме) пухнă. Унта 1951 çулхи сентябрьте, пĕр уйăх хушшинче, ĕççĕр юлнă çынсен хисепĕ пĕр миллион чухлĕ ÿснĕ пулсан, çав империализмлă çĕршывра ĕççыннисем ăçтан-ха 1952 çула «телейлĕ» кĕтсе илме пултарччăр? Ĕççыннисен реальнăй ĕç укçи пĕр чĕрĕке яхăн чакнă, монополистсен усламĕсем вара иртнĕ çулта 25—30 процент ÿснĕ.

Капитализмлă çĕршывсенчи халăхсем хăйсене пусмăрлакансене хирĕç кĕрешĕве активлă тухаççĕ. 1951 çулта Кăнтăр Хĕвелтухăç Азири, Çывăх тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи колониллĕ çĕршывсенчи халăхсем ирĕке тухассишĕн кĕрешме хăватлăн çĕкленнипе паллă пулса тăчĕ. Пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи миллионшар çынсем çакна лайăх ăнланаççĕ: социализм кăна халăхсене телей парать, халăхсем хушшинче мире çирĕплетет. Çакна вĕсене аслă Совет Союзĕн примерĕ, социализм çулĕ çине тăнă халăх демократи çĕршывĕсен примерĕ лайăх ĕнентерсе парать. Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем Кремлĕн хĕрлĕ çăлтăрĕсен çуттине кураççĕ. Çак çутă пирĕн планетăн кашни кĕтесне пырса кĕрет. Пĕтĕм тĕнчери çынсем çакна уççăн кураççĕ: Мускав миршĕн кĕрешет, халăхăн пурнăçне лайăхлатать, культурине ÿстерет, ку вăл социализмăн законĕ пулса тăрать; çав вăхăтрах Вашингтон—çынсене çаратать, вĕлерет, ăс-тăнне минретет.

Иртнĕ çулăн паллă итогĕсенчен пĕри вăл—пĕтĕм тĕнчере миршĕн тăракансен юхăмĕ малалла ÿсни. Çак юхăма ĕççыннисен аслă çулпуçĕ—Сталин юлташ ертсе пыни пирĕн телей, çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур простой çынсен телейĕ.

Совет халăхĕ телей çăлтăрне хăй тунă. Ленин—Сталин партийĕ хавхалантарнипе эпир хамăрăн телее хаяр çапăçусенче тата хĕрÿ ĕçре хамăр туптанă. Эпир пĕлетпĕр: пирĕн совет çăлтăрĕ айĕнче çынсем телейлĕ çуралаççĕ.

Çавăнпа та телейлĕ совет çăлтăрĕ ĕмĕр-ĕмĕрех çутă пулĕ!

Çавăнпа та эпир Тăван çĕршыва, партие, Сталина чунтан-чĕререн юрататпăр!

Çавăнпа та пирĕн ĕç, Ленин—Сталин ĕçĕ ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕ тата çĕнтерсе пырĕ!

Георгий ГУЛИА,
Сталинла премии лауреачĕ.

Халӑх демократи ҫӗршывӗсенче

Болгари халӑх хуҫалӑхӗн 1952 ҫулхи планӗ

СОФИЯ, декабрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Болгари Халӑх Республикин Министрсен Совечӗ халӑх хуҫалӑхӗн 1952 ҫулхи государство планӗ ҫинчен йышӑннӑ постановленине пичетлесе кӑларнӑ.

Постановленире ҫапла каланӑ: 1951 ҫулта халӑх хуҫалӑхӗн аталанӑвӗ промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗн пур отраслӗсенче те продукци хисепӗ пӗрмаях ӳссе пынипе, транспорт ӗҫӗ лайӑхланнипе, суту-илӳ анлӑ сарӑлнипе, капитальнӑй строительство вӑйланнипе, ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ лайӑхланса, культурӑллӑ шайӗ ӳссе пынипе палӑрса тӑрать. 1951 ҫулхи плана пурнӑҫлани халӑх хуҫалӑхне вӑйлатмалли пилӗк ҫуллӑх плана тӑватӑ ҫулта тултарма условисем туса парӗ.

Государство план комиссийӗн малтанхи сведенийӗсем тӑрӑх, 1951 ҫулта промышленноҫӑн производстви планӗ ӑнӑҫлӑ пурнӑҫа кӗрет. 1951 ҫулта республика промышленноҫӗн продукцийӗ 1950 ҫулхинчен 15,8 процент нумайрах пулать.

Ялхуҫалӑхӗ пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. 1951 ҫулта ялхуҫалӑхӗ 1950 ҫулхинчен 42,9 процент нумайрах продукци туса хатӗрленӗ. Машина-трактор станцийӗсенчи тракторсен хисепӗ, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 23,4 процент ӳснӗ.

Наци тупӑшӗ 1951 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 30 процент ытла ӳснӗ, ҫулталӑк хушшинче рабочисемпе служащисен йышне ҫӗнӗрен 57,5 пин ҫын хутшӑннӑ. Промышленноҫра ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 8,6 процент, строительствӑра—16,1 процент ӳснӗ. Рабочисемпе служащисен ӗҫ укҫи ҫулталӑкра вӑтам шутпа 10,9 процент таран пысӑкланнӑ. 1951 ҫулта промышленноҫ таварӗсене карточкӑпа сутмалли йӗркене пӑрахӑҫланӑ. Государствӑн пӗр пек хакӗсемпе ирӗклӗн суту-илӳ тӑвас ӗҫе аталантарма условисем хатӗрленӗ.

Министрсен Совечӗ малалла халӑх хуҫалӑхӗн 1952 ҫулхи планӗн тӗп задачине палӑртать: промышленноҫ продукцийӗн хисепне пысӑклатса, ӳстерсе пымалла, уйрӑмах электричество энергийӗ туса кӑларас ӗҫе вӑйлатмалла, ялхуҫалӑх машинисем тата кулленхи кирлӗ таварсем нумайрах туса кӑлармалла; хамӑр ҫӗршывра горючи туса хатӗрлеме тытӑнмалла, металлурги аталантармалла, ялхуҫалӑх производстви ӳстермелле; ҫӗре шӑвармалли системӑсем тума вӑйланнипе туллин усӑ курмалла; Совет Союзӗпе тата халӑх демократи ҫӗршывӗсемпе хуҫалӑх политика енӗпе тытакан ҫыхӑнусене ҫирӗплетсе пымалла.

Министрсен Совечӗ Болгари халӑх хуҫалӑхне 1952 ҫулта аталантарса пымалла мӗнле пысӑк ӗҫсем тумаллине палӑртнӑ. Промышленноҫ продукцийӗн хисепне, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 24,4 процент ӳстермелле. Выранти промышленноҫ продукцийӗн хисепӗ 28,7 процент ытларах пулмалла. Электричество энергийӗ 38,5 процент нумайрах туса кӑлармалла. Ҫӗр кӑмрӑкӗ кӑларасси 10,1 процент ӳсмелле. Чугун 1951 ҫулхинчен 111,5 процент ытларах шӑратса кӑлармалла. Ҫӗр мамӑк пир-авӑрӗпе ҫӑм пир-авӑрӗ 17 процент ытларах туса кӑлармалла.

Ялхуҫалӑх продукцийӗн хисепӗ, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 17,7 процент ытларах пулмалла.

Промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗ вӑйланса пынӑ май наци тупӑшӗ 1951 ҫулхинчен 13 процент ытларах, промышленноҫра ӗҫ укҫи фончӗ 11.1 процент ӳсмелле.

Министрсен Совечӗ 1952 ҫулхи пысӑк задачӗсенчен пӗри вӑл промышленноҫра рабочисен ӗҫ тухӑҫлӑхне 16,2 процентран кая мар ӳстересси пулса тӑрать, тесе йышӑннӑ.

Румыни халӑхӗ 1952 ҫула ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илет

БУХАРЕСТ, декабрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Румынири ӗҫҫыннисем ҫӗнӗ ҫула—1952 ҫула халӑх хуҫалӑхӗпе культура строительствин пур облаҫӗсенче те пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илеҫҫӗ. Вӗсем халӑх республики тӑватӑ ҫул тултарнипе тата пилӗк ҫуллӑх планӑн пӗрремӗш ҫулӗ вӗҫленнине ӗҫри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе уявлаҫҫӗ.

1951 ҫулта пӗтӗм рабочи класс «Ҫулталӑкри плана срокчен тултарар!» текен лозунгпа тӑрӑшса ӗҫленӗ. Промышленность предприятийӗсем тата ҫӗнӗ стройкӑсем чылайӑшӗ ҫулталӑкри заданисене срокчен пурнӑҫланӑ. Ҫулталӑкри заданисене срокчен пурнӑҫланӑ предприятисемпе ҫӗнӗ стройкӑсем 1.200 ытла. Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстернипе тата материалсене перекетлӗн расходланипе промышленность ҫулталӑк хушшинче государство валли 3 миллиард лей ытла перекетленӗ.

1951 ҫулта Румынире промышленность вӑйланса пынӑ тата ҫӗнӗ йышши машинӑсем тума вӗренсе ҫитнӗ. Ҫӗнӗ предприятисем туса лартнӑ, киввисене юсаса пысӑклатнӑ. Хунедоарти металлурги комбинатӗнче пысӑк домна кӑмаки тата Бухарестри полиграфи комбиначӗн пӗррремӗш черечӗ ӗҫе кӗнӗ. Иртнӗ ҫулталӑкра Сталин хулинчи трактор заводӗнче «КД-35» йышши пӗрремӗш трактор туса кӑларнӑ. Савӑн йышши тракторсене нумай туса кӑларма вӗренсе ҫитнӗ.

Ҫӗршыври ялхуҫалӑхӗ те чылай пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Тӗп тырпулсен тухӑҫлӑхӗ 1950 ҫулхинчен 51 процент нумайрах пулнӑ. Ҫӗнӗрен 50 машина-трактор станцийӗ тунӑ. Румыни халӑхӗн культури нумай ӳснӗ. Ӗлӗк хут пӗлмен 500 пин ҫын хутла вӗреннӗ, хут пӗлменлӗхе пӗтермелли шкулсенче пӗр миллион ҫын ытла вӗренме тытӑннӑ.

Ялсенче ҫӗнӗрен темиҫе пин библиотека уҫнӑ. Румыни Халӑх Республики тӑватӑ ҫул тултарнӑ ятпа паян вечерсемпе савӑнӑҫлӑ пухусем пулса иртеҫҫӗ. Ҫав пухусемпе вечерсенче Румынири ӗҫҫыннисем хӑйсен телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫӗшӗн Совет Союзне тата Румыни халӑхӗн аслӑ тусне И. В. Сталин юлташа чунтан-чӗререн тав тӑваҫҫӗ. Вӗсем Румынири рабочи партипе хӑйсен правительствине 1952 ҫулта ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума сӑмах параҫҫӗ.

Венгри халӑхӗн ҫитӗнӗвӗсем

БУДАПЕШТ, декабрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Венгри халӑхӗ 1952 ҫула мирлӗ ӗҫре ҫӗнӗ пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илет. 1951 ҫулта ҫӗршывра ҫӗнӗ предприятисемпе цехсем туса лартнӑ. Сталин ячӗпе тӑракан металлурги комбиначӗ—ҫӗршыври чи пысӑк социализм стройки—малтанхи хут тимӗр шӑратса кӑларнӑ. Ноябрӗн 7-мӗшӗ ячӗпе тӑракан электростанци хут промышленность валли энерги парса тӑма пуҫланӑ. Матиас Ракоши ячӗпе тӑракан комбинатӑн трубасем шӑратакан завочӗ ӗҫе кӗнӗ. Ытти нумай предприятисене тата икӗ чугун ҫула ӗҫе янӑ. Ҫӗршыва ирӗке кӑларнӑранпа Дунай юханшывӗ урлӑ вуннӑмӗш кӗпере хывса пӗтернӗ. Будапештра метрополитен тума тытӑннӑ. Хортобаль ҫеҫенхирӗнче ҫӗре шӑвармалли каналсем тӑваҫҫӗ. Ҫӗршывра ҫӗнӗ электростанцисемпе пысӑк заводсем лартаҫҫӗ. Ҫӗнӗ тӗслӗ продукцисем нумай туса кӑларма, ҫав шутра комбайнсем, пассажирски поездсем валли ҫӗнӗ йышши хӑватлӑ пӑравуссем, тӗрлӗ станоксемпе машинӑсем тума вӗренсе ҫитнӗ.

Промышленность производстви 1951 ҫулхи вунӑ уйӑх хушшинче, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 30 процента яхӑн ӳснӗ.

Ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ лайӑхланнӑ. Апат-ҫимӗҫе карточка тӑрӑх сутас йӗркене пӑрахӑҫланӑ. Ӗҫҫыннисем пиншер ҫӗнӗ хваттерсем илнӗ. Ӗҫҫыннисем валли ҫӗнӗ клубсемпе культура ҫурчӗсем, ҫӗнӗ больницӑсем, шкулсем, институтсем, кану ҫурчӗсем, ача сачӗсемпе яслисем валли пин ҫурта яхӑн лартнӑ.

Малта пыракан совет агротехникипе тата совет уй-хирӗсенчи стахановецсен опычӗпе усӑ курса, Венгрире халиччен нихҫан пулман пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илнӗ. Ӗҫ хресченӗсен тупӑшӗ ҫулталӑк хушшинче кӑна 2.625 миллион форинт ӳснӗ. Хресченсем ялти суту-илӳ магазинӗсемпе лавкисенче кӑна иртнӗ ҫулталӑкра 1950 ҫулхинчен икӗ хут нумайрах тавар туяннӑ.

Ӗҫҫыннисем ҫӗнӗ ҫула хавасланса ӗҫленипе, мирпе социализм ӗҫне ҫирӗплетессишӗн тӑрӑшнипе кӗтсе илеҫҫӗ. Вуншар предприятисем пилӗкҫуллӑхӑн виҫҫӗмӗш ҫулӗ шучӗпе продукци туса кӑлараҫҫӗ.

Демократиллӗ Германи Республикинчи металлургсен ҫитӗнӗвӗ

БЕРЛИН, декабрӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Германи Республикинчи металлурги предприятийӗсенче ӗҫҫыннисем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Производствӑри заданисене пурнӑҫлассишӗн ӑнӑҫлӑ кӗрешеҫҫӗ.

Ӑмӑртса ӗҫлекен предприятисем хушшинче «Макс хютте» металлурги комбиначӗ малта пырать. Декабрӗн 27-мӗшӗ тӗлне комбинат горнякӗсем уйӑхлӑх плана 100,7 процент тултарнӑ.

Хеннигсдорфри Вильгельм Флорин ячӗпе тӑракан хурҫӑ завочӗн коллективӗ республикӑри хурҫӑ шӑратакан промышленноҫӑн халӑх предприятийӗсене пурне те 1952 ҫулхи пӗрремӗш кварталта ӑмӑртса ӗҫлеме чӗнсе хатӗрленме, ӑмӑртӑва массӑсене хутшӑнтарма тата ҫав ӑмӑрту условийӗсене сӳтсе явма чӗннӗ. Предприятири ӗҫҫыннисем производствӑн пӗтӗм хӑвачӗпе туллин усӑ курассишӗн, расходсене чакарассишӗн тата юсав ӗҫӗсене хӑвӑртлатассишӗн кӗрешес ыйтусене ӑмӑрту условийӗсене кӗртме сӗнеҫҫӗ.

Берлинра „Коммунизмӑн аслӑ стройкисем" ятлӑ выставка уҫнӑ

БЕРЛИН, декабрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Декабрӗн 21-мӗшӗнче Берлинӑн хӗвелтухӑҫ пайӗнче «Коммунизмӑн аслӑ стройкисем» ятлӑ выставка уҫнӑ. Ку выставкӑна Берлинра пурӑнакансем нумайӑшӗ пырса кураҫҫӗ. Паянхи кунччен выставкӑна 10 пин ҫын ытла пырса курнӑ. Вӗсем хушшинче Берлинӑн хӗвеланӑҫ пайӗнче тата Хӗвеланӑҫ Германире пурӑнакансем чылай пулнӑ.

Берлинӑн хӗвеланӑҫ пайӗнче пурӑнакан Гейнц Метер, выставкӑна пырса курнӑ хыҫҫӑн, ҫапла каланӑ: «Берлинӑн хӗвеланӑҫ пайӗнче пурӑнакан ҫынсем нумайӑшӗ ҫак выставкӑна килсе курса Совет Союзӗ ҫинчен чӑннине пӗлме пултарччӑр, тесе эпӗ пӗтӗм вӑя хурса тӑрӑшӑп».

Америкӑн тӑватӑ летчикне Венгрирен кӑларса янӑ

БУДАПЕШТ, декабрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Венгри телеграф агентстви ҫакӑн ҫинчен пӗлтернӗ:

Венгри ҫар сучӗ Америкӑн Венгри территорине вӗҫсе кӗнӗ ҫар самолечӗн экипаж членӗсене кашнине 360 пин форинт штраф тӳлеттермелле тунӑччӗ. Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Будапештри миссийӗ штраф укҫине тӳлеме пулни ҫинчен Венгри ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствине пӗлтернӗ. Декабрӗн 28-мӗшӗнче укҫа тӳлесе татнӑ. Венгри влаҫӗсем Америкӑн 4 летчикне ҫав кунах Венгрирен кӑларса янӑ.

Францири ӗҫҫыннисем вӑрҫа хатӗрленнине хирӗҫ

ПАРИЖ, декабрӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Францире ҫар строительствине тата вӑрҫа хатӗрленес ӗҫе малалла туса пыраҫҫӗ. «Юманите» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Монбартье хулине (Тарн тата Гаронна департаменчӗ) Америка офицерӗсем темиҫе хутчен те пырса кайнӑ. Савӑн хыҫҫӑн унта горючи складне юсаса йӗркеленӗ. Ку складпа тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче гитлерла оккупантсем усӑ курнӑ пулнӑ.

Лалури (Об департаментӗнчи Бриенле-Шато хули ҫывӑхӗнче) ҫар лагерьне пӗрмаях ҫар хатӗрӗсем илсе пырса тӑраҫҫӗ. Ку лагере кашни кунах авиаци бомбисем тиенӗ поездсем пыраҫҫӗ. Францири ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ йывӑр, вӗсен нимӗҫта укҫа тупма май килмест. Ҫапах та вӗсем вӑрҫа хатӗрлемелли ӗҫре ӗҫлеме, ҫав поездсене пушатма килӗшмеҫҫӗ. Ку поездсене салтаксем пушатаҫҫӗ, салтаксене «республика хӑрушсӑрлӑхӗн отрячӗсем» сыхлаҫҫӗ.

Холла тӗрмере лартмалли срока тӑснӑ

НЬЮ-ЙОРК, декабрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). США-ри коммунистсен партийӗн секретарьне Холла компарти руководителӗсене айӑпласа суд тунӑ чухне пилӗк ҫуллӑха тӗрмене лартмалла тунӑ. Вӑл кӑҫалхи июль уйӑхӗнче тӗрмере ларма пыман. Ҫавӑншӑн ӑна халӗ тепӗр хут суд тунӑ, вӑл тӗрмере лармалли срока тата виҫӗ ҫул хушнӑ.

Рейнер судья ҫапла каланӑ: Холла «суда кӳрентернӗшӗн» икӗ статья тӑрӑх айӑпланӑ, кашни статья тӑрӑх виҫшер ҫул хушши тӗрмере лартма приговор йышӑннӑ.

Корейӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, декабрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн главнӑй командованийӗ декабрӗн 29-мӗшӗнче ҫапла пӗлтернӗ:

Корея Халӑх ҫарӗн соединенийӗсем Китай халӑх добровольцӗсен чаҫӗсемпе пӗрле оборонӑра тӑрса уйрӑм участоксенче ҫапӑҫаҫҫӗ, тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсене тата техникине чылай пӗтереҫҫӗ.

Хӗвелтухӑҫӗнчи фронтра Халӑх ҫарӗн чаҫӗсем тӑшманӑн 2 танкне тата унӑн салтакӗсене пӗр рота чухлӗ пӗтерсе тӑкнӑ.

Паян Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ ҫапӑҫакан салтакӗсем тӑшманӑн 3 самолетне персе ӳкернӗ, унччен ҫав самолетсем Корейӑн хӗвелтухӑҫӗнчипе хӗвеланӑҫӗнчи ҫыранӗсенчи мирлӗ хулисемпе ялӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ пулнӑ.

ПХЕНЬЯН, декабрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн главнӑй командованийӗ паян ҫапла пӗлтернӗ: Корея Халӑх ҫарӗн соединенийӗсем Китай халӑх добровольцӗсен чаҫӗсемпе пӗрле пур фронтсенче те оборонӑра тӑрса ҫапӑҫнӑ, Америкӑпа Англи интервенчӗсен тата Ли Сын Ман ҫарӗсен салтакӗсемпе офицерӗсене тата техникине чылай пӗтернӗ.

Паян Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ ҫапӑҫакан салтакӗсем тӑшманӑн 4 самолетне персе ӳкернӗ, унччен ҫав самолетсем Вонсанпа Нампхо районӗсенчи хуласемпе ялсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ пулнӑ.

ЯПОНИ САЛТАКӖСЕМ КОРЕЙӐРИ ВӐРҪӐРА ҪАПӐҪАҪҪӖ

ПРАГА, декабрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Телепресс агентствин спецкорӗ Сан-Францискӑран ҫапла пӗлтерет: Америкӑн Корейӑри вӑрҫӑра аманса США-на таврӑннӑ салтакӗсем декабрь уйӑхӗн малтанхи пайӗнче Корейӑна Япони салтакӗсемпе унтер-офицерӗсен ушкӑнӗсем пырса тӑма пуҫлани, ҫав ушкӑнсенче 100 ҫынтан пуҫласа 150 ҫын таран пулни ҫинчен каласа кӑтартнӑ.

Японецсен ушкӑнӗсене 9-мӗш ҫар корпусне, 7-мӗшпе 24-мӗш дивизисене кӗртнӗ.

Аманнисем каланӑ тӑрӑх, ҫав салтаксене пурне те Гумма, Яманаси, Сидзуока префектурисенчи американецсен ҫар лагерӗсенче ятарласа вӗрентсе хатӗрленӗ.

Америкӑн пӗр аманнӑ салтакӗ 9-мӗш ҫар корпусӗнче пулнӑ Япони унтер-офицерӗ Окада ҫинчен каласа панӑ. Окадӑна 1951 ҫулхи март уйӑхӗнче, Хоккайдо утравӗ ҫинчи Бихоро хулинче «Ҫамрӑксен производствӑна ӳстерес тӗлӗшпе ӗҫлекен отрячӗ» текен организаци ҫара илнӗ, унтан ӑна Корейӑна янӑ. Ҫав организаци 1950 ҫулта, Корейӑри вӑрҫӑ пуҫлансанах американецсем ертсе пынипе туса хуни ҫинчен Окада салтаксене пӗлтернӗ. Ку организаци тунӑранпа Японин темиҫе пин салтакне Корейӑна янӑ. Вӗсен тепӗр пайӗнче 10-мӗшпе 16-мӗш корпуссене пулӑшса тӑракан чаҫӗсенче Японире усӑ кураҫҫӗ.

Кунсӑр пуҫне, Окада хӑйпе пӗрле ӗлӗк салтак пулнӑ 400 ҫынна ҫар ӗҫне вӗрентни ҫинчен каласа панӑ. Ку ҫынсем хӑй вӑхӑтӗнче Китайри, Малайӑри тата Бирмӑри вӑрҫӑсенче ҫапӑҫнӑ. Вӗсем хушшинче тата «хресчен ҫамрӑкӗсен союзӗ» текен «добровольцсен отрячӗсен» темиҫе членӗ пулнӑ.

Японин Корейӑна пыракан салтакӗсене пурне те америка ҫар ҫыннисен тумтирне тӑхӑнтартнӑ. Ҫак ушкӑнсемпе партизансене хирӗҫ кӗрешме тата фронт ҫывӑхӗнчи ҫул-йӗрсене, ҫар склачӗсене, сооруженисене хураллама карательнӑй отряд е полици отрячӗ вырӑнне усӑ кураҫҫӗ.

Часах Пусан хулине Япони полицийӗн резерври корпусӗн чаҫӗсем пырса ҫитессине кӗтеҫҫӗ, тенӗ аманнӑ салтаксем.

АМЕРИКА АВИАЦИЙӖН КОРЕЙӐРИ ТИСКЕР ӖҪӖСЕМ

ПХЕНЬЯН, декабрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Корейӑн тӗп телеграф агентстви Америка самолечӗсем мирлӗ хуласемпе ялсем ҫине тискеррӗн тапӑнни, бомбӑсем нумай пӑрахни тата пулеметсемпе пени ҫинчен пӗлтернӗ. Ҫав пӗлтерӗве Корейӑри хаҫатсем ҫинче пичетленӗ.

Пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: Америка интервенчӗсем икӗ питленсе Корея ыйтӑвне мирлӗ майпа йӗркелеме тӑрӑшни ҫинчен сӳпӗлтетеҫҫӗ, чӑннипе вара калаҫусене вӑраха тӑсаҫҫӗ, вӗсене путлантарса лартма тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем калаҫусем пынӑ вӑхӑтра хӑйсен ҫарӗсене вӑйлатма тӑрӑшаҫҫӗ. Корейӑри вӑрҫа тата ытларах сармалли политика тытса пыраҫҫӗ. Корейӑри перемири ҫинчен калаҫусем пуҫланнӑранпа Америкӑн сывлӑшри вӑрӑ-хурахӗсем Корейӑн мирлӗ хулисемпе ялӗсем ҫине бомбӑсем ытларах пӑрахма тытӑннӑ. Унтанпа Америка бомбардировщикӗсемпе истребителӗсем Ҫурҫӗр Корейӑри хуласемпе ялсене кашни кунах тапӑнаҫҫӗ.

Ҫапла, декабрӗн 18-мӗшӗнче вӗсем Кӑнтӑр Пхенан провинцийӗнчи Чунхва уездӗнчи Сусан вулӑсӗнчи ялсем ҫине бомбӑсем нумай пӑрахнӑ тата пулеметсемпе хытӑ пенӗ. Самолетсем вут тивертекен бомбӑсем нумай пӑрахнӑ, темиҫе ҫӗр фугаслӑ бомба пӑрахса хӑварнӑ. Ҫавна пула Сусан вулӑсӗн территорийӗнче нимӗн те юлман.

Ҫав кунах Америкӑн 8 реактивлӑ самолечӗ Кӑнтӑр Пхенан провинцийӗнчи Кэндок вулӑсӗнче уй-хирте ӗҫлекен хресченсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ тата пулеметсемпе пенӗ.

Америкӑн сывлӑшри вӑрӑ-хурахӗсем Корея хулисемпе ялӗсене ҫӗрле хытӑ тапӑнаҫҫӗ. Вӗсем ҫӗрле тискеррӗн тапӑннине пула мирлӗ граждансенчен кашни талӑкрах темиҫе ҫӗр ҫын вилет.

НОРВЕГИ ҪАРӖСЕНЕ КОРЕЙӐНА ЯРАССИНЕ ХИРӖҪ КӖРЕШЕҪҪӖ

ОСЛО, декабрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Норвеги влаҫӗсем Корейӑна ҫар яма хатӗрленеҫҫӗ. Влаҫсем Корейӑна ҫар яма хатӗрленнине хирӗҫ протестлесе Норвегири ӗҫҫыннисем сторинга ҫырусем яраҫҫӗ.

«Халӑхӑн вӑрҫа хирӗҫ кӗрешекен юхӑмӗ» ятлӑ пацифистла организацин Тронхейм хулинчи ушкӑнӗ, миршӗн тӑракансен Норвегири комитечӗ, миршӗн тӑракан ҫамрӑксен комитечӗ, Пӗтӗм тӗнчери демократиллӗ хӗрарӑмсен Норвегири секцийӗн уйрӑмӗ хулара митинг пухнӑ. Митинга пухӑннисем хӑйсен резолюцийӗнче ҫапла ҫыраҫҫӗ: «Стортингран эпир правительство Норвеги ҫарӗҫене Корейӑна яма йышӑннине пӑрахӑҫлама, ҫав ӗҫе пирӗн конституцире каланӑ пек тума ыйтатпӑр. Корейӑна ют ҫӗршывсен ҫарӗсем кирлӗ мар, ӑна мирлӗ пурнӑҫ тата пурнӑҫа юсама пулӑшни кирлӗ».

Ҫавӑн пек резолюцисене юлашки кунсенче Лиллестрем хулинчи профсоюзсен ултӑ организацийӗ, рабочи партинчи ҫамрӑксен чылай организацийӗсем, ҫав шутра Ставангер хулинчи икӗ организаци тата Ҫурҫӗр Норвегин темиҫе хулинчи организацисем, Тронхейм хулинчи моряксен тата рабочи-литейщиксен союзӗсем, Драммен хулинчи тимӗр-тӑмӑр шӑратакан заводри рабочисен коллективӗ тата ытти нумай организацисемпе коллективсем йышӑннӑ.

„Кӗлмӗҫсен союзӗ"

НЬЮ-ЙОРК, декабрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). «Форчун» журналӑн декабрьти номерӗнче «Европӑра ҫӗнӗрен хӗл сивӗ пулать» ятлӑ статья пичетленӗ. Ӑна журнал редакцийӗ ҫырнӑ.

«Вашингтонра, тесе ҫырнӑ журналта, чӑтӑмлӑ, сӑн-пуҫран пӑхсан тирпейлӗ, анчах пуласлӑх пирки шикленсе ӳкнӗ нумай ҫынсем пӗр управленирен тепӗр управление кӗрсе ҫӳреҫҫӗ. Вӗсем—Европӑри таварсем илекен миссисен представителӗсем. Вӗсен аллинчи сведенисем вӗсене ҫӗр кӑмрӑкӗ, хурҫӑ, молибден тата хӗҫтимӗр питӗ кирлине кӑтартса параҫҫӗ. Вӗсен обязанноҫӗ, черет йышӑнса, мӗн парассине кӗтсе тӑрасси—хисепсӗр тата шанчӑксӑр ӗҫ... Ҫак представительсем—хальхи саманари паллӑ ҫынсем—хӑйсене хӑйсем тӑрӑхласа «кӗлмӗҫсен союзӗ», тесе калаҫҫӗ.

«Сентябрь уйӑхӗнче Оттавӑра,—тесе ҫырать малалла журнал,—хӗл ҫывхарса килни ҫинчен Пӗрлешӳллӗ Штатсене асӑрхаттарнӑ. Ун чухне Ҫурҫӗр Атлантика союзне кӗнӗ ҫӗршывсен представителӗсем вӗсен йывӑрлӑха кӗрсе ӳкнӗ экономикине татах та начарлатма пултаракан кирек мӗнле требованисене хирӗҫ те протестлерӗҫ, вӗсем хӑйсен хӗҫпӑшалланмалли программине пурнӑҫлама пултарас ҫукки ҫинчен систерчӗҫ... Кун пек е урӑхла пулсан та, Ҫурҫӗр Атлантика союзне кӗнӗ ҫӗршывсем пурте чухӑнланса юлни паларчӗ. Францире укҫа хӑвӑрт йӳнелсе пырать. Италие ӗҫсӗр тӑрса юлнӑ миллионшар ҫынсем шиклентереҫҫӗ. Вӗсене хӑйсен помидорӗсене тултарма банксем тума хӗҫтимӗр кирлӗ. США ҫавӑн йышши материалсем пама килӗшмен.

«Тӗпрен илсен, кризис Англие хупӑрласа илчӗ,—тет журал.—Ҫав кризис мӗн тери пысӑк иккен кӳнине Англи укҫа-тенкӗ енӗпе йывӑрлӑха кӗрсе ӳкнинчен пӗлме пулать. Тӗнчери ҫӗршывсем хушшинчи суту-илӳ енӗпе Англин парӑмӗ пысӑк. Англи хӑйӗн ҫӗршывне ытти ҫӗршывсене сутнинчен нумайрах тавар кӳрсе пынипе 1,9 миллиард долларлӑх парӑма кӗнӗ. Унӑн ылтӑн тата доллар запасӗсем 3,2 миллиард доллар чухлӗ чакнӑ. Вӑл Европӑри ҫӗршывсем хушшинчи тӳлевсен союзӗ умӗнче нумай парӑма кӗнӗ, ӑна хӑйӗн кӳршисем шанми пулаҫҫӗ, нацисен туслӑхӗ текен союза кӗрекен ҫӗршывсем те Англи ҫине кӑмӑллӑ пӑхмаҫҫӗ. Ку енӗпе Англи чӑнах та панкрута тухасси патнех ҫитнӗ.

Англи йывӑрлӑха кӗрсе ӳкнине мӗнпе ӑнлантарса памалла-ха: вӑл хӗҫпӑшалланма укҫа-тенкӗ ытла та нумай расходлать, 1951 ҫулта кӑна хӗҫпӑшалланма 3,6 миллиард доллар пӗтерет; унӑн Иранра парӑнмалла пулчӗ; Англи тӗнчери ытти ҫӗршывсенче туянакан таварсен хакӗсем вӑл хӑй ытти ҫӗршывсене сутакан таварсен хакӗсенчен чылай хӑвӑртрах ӳссе пычӗҫ.

...Англие молибден, никель, цинк, кӳкӗрт тата, пуринчен ытла, кивӗ тимӗр-тӑмӑрпа тимӗр-тӑмӑр тӑпри ҫитмест. Унӑн промышленность структурине ҫӗмӗрекен тӗп йывӑрлӑх вӑл—ҫӗр кӑмрӑкӗ сахал кӑларни. 25 ҫул каярах ҫӗр кӑмрӑкӗ унӑн тулашри суту-илӗвӗнче тӗп вырӑнта пулнӑ, вӑл урӑх ҫӗршывсене вуншар миллион тонна ҫӗр кӑмрӑкӗ сутса тӑнӑ. Халӗ унӑн хӑйӗн промышленноҫӗ валли тата ҫуртсене ӑшӑтма ҫӗр кӑмрӑкӗ ҫитмест. Иртнӗ хӗлле лейбористла правительствӑн ҫӗр кӑмрӑкӗ США-ран илсе пымалла пулнӑ.

Ҫӗр кӑмрӑкӗ ҫитмен пирки хурҫӑ шӑратас ӗҫ те чакнӑ. Ҫӗр кӑмрӑк шахтисене урӑхлатса лайӑхлатма, ҫапла майпа ҫӗр кӑмрӑкӗ нумайрах кӑлармалла тума кирлӗ хурҫа халӗ ӗлӗкхинчен сахалтарах шӑратса хатӗрлеҫҫӗ. Хурҫӑ Англин начарланнӑ транспортне урӑхлатса лайӑхлатма та кирлӗ...»

Кризис ҫывхарса пыни ҫинчен ҫырса, «Форчун» журнал: Пӗрлешӳллӗ Штатсем мӗн тума хатӗрленеҫҫӗ-ха, тесе ыйтать. Унтан журнал ҫапла ҫырать: США-н 82-мӗш созыври конгресӗ «хӑрушсӑрлӑха пӗрле хӳтӗлессине» пурнӑҫлама уйӑрнӑ фондран Хӗвеланӑҫ Европӑна 1952 ҫулта 6 миллиард доллар пама палӑртрӗ. Анчах пӗр миллиард долларне ҫеҫ экономикӑна лайӑхлатас ӗҫре «пулӑшма» параҫҫӗ.

Виҫӗ ҫуллӑх курс преподавателӗсен семинарӗсем

КУВАКИНО. Районти пур колхозсенче те агрозоотехникӑна вӗренмелли виҫӗ ҫуллӑх курссем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенче пӗтӗмпе 625 ҫын вӗренет. Вӑл шутран 350 ҫын иккӗмӗш ҫул вӗренеҫҫӗ.

Преподавательсем хушшинче 15 агроном, 13 зоотехникпа ветеринари работникӗсем. Преподавательсене пулӑшас шутпа районта час-часах семинарсем пулса иртеҫҫӗ, семинарсенче программӑри кашни темӑна тӗплӗн пӑхса тухаҫҫӗ. Занятисене ирттерме мӗнле хатӗрленмелли ҫинчен, вӗренӳ пособийӗсене хатӗрлесе вӗсемпе мӗнле усӑ курмалли ҫинчен тӗплӗн сӳтсе яваҫҫӗ.

Ялхуҫалӑх пайӗ семинарсем ирттерме колхоз производствинче ӗҫлекенсене те хутшӑнтарать.

Инвалидсемшӗн тӑрӑшни

Партипе правительство Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсемпе ӗҫ инвалидӗсемшӗн тата Тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫса хӑйсен пуҫне хунӑ ҫынсен ҫемйисемшӗн куллен тӑрӑшаҫҫӗ, вӗсене пулӑшу параҫҫӗ.

Инвалидсен сывлӑхне юсама государство ҫулсеренех нумай укҫа-тенкӗ расходлать. Чылай инвалидсем курортсемпе санаторисенче пулаҫҫӗ.

1951 ҫулхи 10 уйӑх хушшинче Чӑваш АССР Социальнӑй обеспечени министерстви 180 инвалида тӗрлӗ курортсемпе санаторисене кайма путевкӑсем панӑ.

Ноябрӗн 1-мӗшӗнче Кувшинкӑра Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсен кану ҫурчӗ ӗҫлеме пуҫларӗ. Кану ҫурчӗ малашне ҫулталӑк тӑршшӗпех ӗҫлемелле.

Вӑрнар районӗнче

Трактористсен курсӗ. Машина-трактор станцийӗ кӑҫал трактористсем вӗрентсе хатӗрлеме виҫӗ уйӑхлӑх курс организацилерӗ. Унта 27 ҫын вӗренет. Вӗсем «ДТ » тата «С-80» маркӑллӑ тракторсемпе ӗҫлеме вӗренеҫҫӗ.

МТС дирекцийӗ трактор бригадисен бригадирӗсене кашни кун икшер сехет вӗрентмелле турӗ. Занятисене МТС агрономӗсем тата главнӑй инженер П. Ефремов юлташ ирттерет.

Художествӑллӑ пултарулӑх смотрӗ. Районта ялсенчи художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсен смотрӗ пуҫланчӗ.

Мӑнъял Хапӑсри «Гигант» колхозри драма кружокӗ смотра хутшӑнса П. Осиповӑн «Айтар» пьесине лартса пачӗ. Смотр комиссийӗ спектакле ӑнӑҫлӑ лартнине палӑртрӗ, коллектива районти смотра хутшӑнма сӗнчӗ. Смотр комиссийӗ Е. Никитин колхозник А. И. Крылова С. Михалковӑн юптарӑвӗсене лайӑх вуланине палӑртрӗ, ӑна районти смотра хутшӑнма сӗнчӗ.

Кушлавӑшри Крупская ячӗпе тӑракан колхозри драма кружокӗ А. Кӑлканӑн «Хаваслӑх» пьесине лартнине смотр комиссийӗ те, куракансем те ырласа йышӑнчӗҫ.

Ҫамрӑк художниксен кружокӗ. Элмен Сунарти клубра ҫамрӑк художниксен кружокӗ ӗҫлет. Кружок 7 ҫынна пӗрлештерсе тӑрать. Вӗсем ӳкерчӗксем тума вӗренеҫҫӗ. Кружока клуб заведующийӗ Е. Захаров юлташ ертсе пырать.

Кружок членӗсем колхозри «Вӑйлӑ тырпулшӑн» стена хаҫатне илемлетсе кӑларма пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем халӗ хӑй тӗллӗн вӗреннӗ художниксен районти выставкине хутшӑнма хатӗрленеҫҫӗ.

Кружок членӗ А. Иванов юлташ Кольцовкӑри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ С. К. Коротков портретне, Захаров юлташ колхозлӑ ялала сӑнлакан картина ӳкернӗ.

Кӗскен

МУРКАШ. Машина-трактор станцийӗ ҫӗнӗ машинӑсемпе пуянланса пырать. Ҫавна май механизаторсем ытларах кирлӗ пулаҫҫӗ. Халӗ МТС ҫумӗнче трактористсен виҫӗ уйӑхлӑх курсӗ ӗҫлеме пуҫларӗ. Унта 35 ҫын вӗренет.

ПАРАЧКАВ. Районта выльӑх-чӗрлӗх перепиҫне ирттерме лайӑх хатӗрленеҫҫӗ. Счетчиксем тата тӗрӗслесе ҫӳрекен работниксем пулма ҫынсем уйӑрнӑ. Вӗсемпе канашлу ирттернӗ. Ҫавӑн пекех ял Совет председателӗсемпе секретарӗсен тата колхоз счетоводӗсен канашлӑвӗнче те выльӑх-чӗрлӗх перепиҫне ирттересси ҫинчен сӳтсе явнӑ.

ҪӖРПУ. Ялхуҫалӑх техникумӗ вӗренекенсене лайӑх пӗлӳ парас шутпа ҫулсерен ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ машинӑсем илет. Пӗлтӗр «С-4» самоходнӑй комбайн, «С-80» трактор илсе килнӗччӗ. Кӑҫал «ДТ-54» трактор, автомашина илсе килчӗҫ. Халӗ техникумӑн 5 трактор, виҫӗ автомашина тата ытти ялхуҫалӑх машинисем те нумай.

Ответлӑ редактор М. К. КОСТИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлӑ редактор—0-67, ответлӑ редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑҫ пайӗ—4-17, ялхуҫалӑх пайӗ—3-07, пропаганда пайӗ—8-61, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

04894 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.